Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АВГУСТ 10 ЙУНКУН 183 (4996) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АСС Республикĕн Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 6—67, Ред. заместителĕн 6—[illegible], Редакци секретарĕн [illegible], Дежурнăйăн [illegible]

Кĕлтесене капана хывас, авăн çапас тата государствăна тырă тăратас ĕçсене хăвăртлатар

Уйри тырпулсене кĕске срукра тата лайăх пахалăхпа пухса кĕртсе йалхуçалăх çулне ăнăçулăн вĕçлеме кирлĕ условисем республикăра пурте çителĕклĕ. Тырпулсем иртнĕ çулхинчен малтанрах пулса çитрĕç. Уй ĕçĕ валĕçи çанталăк та пит те лайăх тăрать. Трактăрсемпе комбайнсем, жнейкăсемпе молотилкăсем иртнĕ çулхинчен чылай ытларах. Çав машинăсемпе ĕçлеме пултаракан кадр та пур.

Колхозниксемпе колхозницăсен, комбайнерсемпе трактăрисен политикăлла тата производствăлла активлăхĕ те кăçал пит пысăк. Комбайнерсенчен Кушманăв (Йелчĕкри МТС), Чекушкин (Шăнкăртамри МТС), Шекерĕв (Патăрйелти МТС) йулташсем кунне 30 гектар ытла пухса пыраççĕ. „Красный партизан" колхозри (Кувакинă р.) машиновед Рассейкин йулташ пек жнейкăпа кунне 12—14 гектар выракансем те кăçал йышлăн.

Кăнтăр йенчи районсенче чылай колхозсем çуртрисене те вырса пĕтерчĕç. Патăрйел районĕнче пайана 12 колхоз пĕтĕм тырра вырса пĕтернĕ. „Комбайн" колхоз кĕрхи тырăсене çеç мар, çуртрисене те çапса пĕтернĕ. Республикăн вăтаçĕрти районĕсенче те малта пыракан колхозсенче çуртрисене вырса пĕтернĕ. Ишлей районĕнчи Ишек колхозĕнче пилĕк бригадăра çуртрисене те вырса пĕтернĕ тĕслĕх, çурçĕр йенчи районсенче те çурхи тырăсене çак кунсенчех вырса пĕтерме май пуррине кăтартать.

Чылай колхозсем иртнĕ çулхинчен те вăйлăрах тырпул туса илеççĕ. Туçи Мăратри „Клевĕр" колхазра (Вăрнар р.) Çтепанăв йулташ бригади гектартан 22-шер центнĕр, Воробйов бригади — 20-шер центнĕр кĕрхи тулă илнĕ. Ишекри Сталин йачĕпе тăракан колхозра 8-мĕш бригадăра 14 гектар çинчен 23-шер центнĕр ытларах ыраш тухать; 3-мĕш, 4, 5 тата 6-мĕш бригадăсем те çавăн чухлех илеççĕ.

Анчах та вăйла тырпул пулни тата малтанхи кунсенче тырпулсене пухса кĕртес ĕç, пĕтĕмĕшпе илсен, хăвăртрах пулса пыни хăшпĕр районсенчи руководителсен пуçĕсене çавăрăнтарса йанă. Вăл ни малтанах тырпулсене пухса кĕртес ĕçре йулашки вăхăтра хăвăртлăх чăтма çук чакса пынинчен уççăн курăнать.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕç уйри тырпула вырнипех пĕтмест. Пĕр кĕлте йулмиччен пухса кĕнĕ участкăна çеç вырса кĕртнĕ теме пулать, вырса турттарса кĕртнĕ хыççăн çапса тĕшлесе ампара хывсан çеç тырпулсене пухса кĕртес ĕç пĕтнĕ шутланать. Анчах та чылай районсенчи парти тата совет организацийĕсем, çĕрĕç оргăнĕсемпе МТС руководителĕсем ку таранччен çав ĕçсем çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхман.

Кувакинă тата Улатăр районĕсенче августăн 1-мĕшнех ыраш кĕлтисене çурри ытла çапма тата капана хывма турттарнă пулсан, Ишлей районĕнче пайан кунччен 24 процент çеç турттарнă. Шупашкар районĕнче те ыраш кĕлтисем çурри ытла халĕ те уйрах лараççĕ. Ку районсенче çуртрисене вырас ĕç те вăрăма кайать. Çапла пулсан та комбайнсемпе ĕçлессине ку районсенче халиччен йĕркелесе çитереймен. Комбайнсемпе ĕçлемели плана Ишлей районĕнче мĕн пурĕ те 24,4 процент çеç тултарнă.

Вырнă хыççăн 10—15 кунтан ытла вăрама йамасăр кĕлтесене капана хывса çитермеле,—çапла хушать правительствă. Тăкаксемпе çăннипех кĕрешес текен, тырпулсене ăнăçулăн пухса кĕртес текен кашни колхоз çапла тума тивĕçлĕ.

Тепĕр 5—7 кунтан кĕраки ĕçĕ пуçланать. Çав ĕç пуçланиччен вырнă тырра пĕтĕмпех капана хывса çитермеле. Çанталăк та йалан уйăр тăрас çук. Çитес кунсенчех çăмăрсем пулма, йĕпе-сапа çанталăк пуçланма пултарать. Çавă та кĕлтесене турттарса капана хывас ĕçе хăвăртлатма хушать.

Республикăн пур районсенче те авăн çапас ĕç çителĕксĕр пырать. Вырма тухсан 8—5 кунта авăн çапма тытăнмала, тесе ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кăтартса панине нумай районсенче татăклăн пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Чылай МТС-сенче молотилкăсем ĕçлемесĕр лараççĕ. Шупашкар районĕнче 17 молотилкăран 6 молотилкă çеç йĕркелĕ ĕçлеççĕ, Тутаркас районĕнче 2 молотилкă вăл çук пирки ĕççĕр лараççĕ. Ишлей районĕнче кĕрхи тырăсенĕ пайан куна мĕн пурĕ те 10 процент çеç çапнă.

Авăн çапасси вăрăма кайни тата государствăна тырă тăратас ĕçе вăхăтра пурнăçлассине чарса тăрать. Августăн 5-мĕшне обйазательнă йĕркепе панă тырă республикипе 13 процент çеç пухăннă. Канаш районне кĕрекен колхозсен хăйсен районĕн центрне çеç леçмеле пулсан та, Канаш районĕ хальтан пуринчен те кайра тăрать. Вăрмар, Йĕпреç, Улатăр районĕнчи колхозсен те айакка леçмеле мар. Çапла пулсан та çав районсем халь, Канаш, Тăвай, Йелчĕк тата Патăрйел районĕсемпе пĕрле государствăна тырă парса татас тĕлĕшпе пĕтĕм республикăна кайала туртса пыракансем пулса тăраççĕ. Çак районсенче халех татăклă улшăну тумала. Кăçал кĕрхи тырăсенепе çеç мар, çурхи тырăсенепе те государствă умĕнчи обйазательствăсене август уйăхĕнче тултарса çитерме кирлĕ майсем пурте пур. Çавăн пек йĕркене тăрать кăçал колхозсем тата йединоличниксем умĕнче.

Авăн çапас ĕçе вăраха йамала мар. ПСК(б)П райкомĕсене, райĕçтăвкомсен тата çĕрĕç оргăнĕсен МТС-сенчи тата колхозсенчи молотилкăсене пурне те ĕçлеттермеле туса, тырă тăратас тĕлĕшпе государствă умĕнчи обйазательствăсене срукченех пурнăçа кĕртес ĕçе организацилемеле.

Йалхуçалăх çулĕ ăнăçулăн вĕçленесси тырпулсене пухса кĕртес ĕçе ăнăçулăн иртериччен килет. Çавăнпа та тырпулсене пухса кĕртес ĕçе иртересси районсенчи парти, совет организацийĕсемшĕн тата çĕрĕç оргăнĕсемшĕн, çав организацисенчи кашни работникшĕн социалисăмлă йалхуçалăха йĕркелесе пырас йенĕпе политикăлла экзамен пулса тăрать. Тырпулсене кĕске вăхăтра тата тăкаксăр пухса кĕртсе государствă умĕнчи обйазательствăна тата натурплатăна вăхăтра тултарнă районсенчи работниксем çав экзамена тивĕçлипе тытĕç.

Паттăр пограничниксене салам!

Канаш—Шупашкар чукунçул строительствинчи II-мĕш околодкăра ĕçлекен рабочисен митингĕ йышăннă резолюци

Урса кайнă фашисла агрессăрсене епĕр чĕререн ылханатпăр. Пире партипе правительствă пĕрре чĕнсенех хамăрăн паттăр пограничниксемпе йулташла тăрса тăван çĕршывшăн тăшмансемпе çапăçма хатĕр.

Пирĕн таса совет çĕршывĕ çине фашиссен таса мар урийĕсем нихăçан та пусаймĕç. Епĕр Йапони провокаторĕсен ирсĕр ĕçĕсене стахановла ĕçленипе ответлетпĕр. Ĕç нормисене 150 процент тултаратпăр.

Йапони захватчикĕсене хирĕç пултарулăн çапăçакан бойецсене хĕрӳлĕ салам!

Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ тата унăн çулпуçĕ Сталин йулташ!

Сывă пултăр паркатăрлă „Хĕрлĕ Çар тата унăн полководецĕ Ворошилов йулташ!

Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă фронтăн мухтавлă бойецĕсене хĕрӳлĕ салам!

Совет халăхĕн таса та хайар çилли

Совет Сойузĕнчи хуласенчен, йалсенчен халь те калама çук нумай телеграммăсем, çырусем, нумай пин çынлă митингсенче йышăннă резолюцисем килсе тăраççĕ, вĕсем Советсен çĕршывĕнчи ĕççыннисем Йапони военщинин авантурисемпе провокацийĕсене хирĕç хайаррăн тарăхса çилленни çинчен каласа параççĕ.

„Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă фронтăн бойецĕсене, социалисăмлă тăван çĕршыв чиккисене хăйсен пурнăçне шеллемесĕр сыхлаканскерсене саламласа, пĕтĕм совет халăхĕ хăй совет чиккисене сыхламашкăн никам çĕнтерейми вăй пулса тăма кашни минутрах хатĕрри çинчен калать. Хабаровск хулинчи ĕççыннисен 110 пин çынлă митингĕ халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ йачĕпе çырнă çырура çапла калаçĕ:

„Хăватлă протест хумĕ çĕкленсе кайрĕ социалисăм çĕршывĕ тарăх. Совет халăхĕн çилли аслă та хăрушă. Çак таса çилĕ хăйсен пуçĕсам çине йатăнса ансан вара фашисла бандитсем хăйсене кăна ӳпкелеччĕр. Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ тавра, унăн Тĕп Комитечĕ тавра тата, Сталин йулташ, Сирĕн тавра тимĕр стена пек пĕрлешсе петĕçсе тăракан совет халăхĕн тĕрекне тата унăн морально-политикăлла пĕрлĕхне пĕлччĕр вĕсем".

Владивостокри 60 пин ĕççыннисем хăйсен Сталин йулташ патне йанă çырăвĕнче çапла çыраççĕ:

„Совет Приморйинчи кашни савăт, кашни колхоз, кашни çĕр татăкĕ—крепăç, Йапони военщинин тата тĕнчери фашисăм вăл крепăç çине пырса тăрăнса шăлĕсене хуçса пĕтерĕç. Кирлĕ пулсан, епĕр пурте, пĕр çын пек пулса, алла хĕçпăшал тытса Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă Фронтпа пĕр рете тăрăпăр, совет территорийĕ çинче пĕр тăшман йулмиччченех кĕрешĕпĕр. Пĕлсе тăтăр тĕнчери фашисăм: Советсен çĕршывне пуç тайтарма пултаракан вăй тĕнчере çук".

—Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă Фронт бойецĕсемпе командирĕсем Йапони военщинине çирĕп урок пачĕç. Пирĕн чикĕ урла каçса кĕме хăйнă фашисла йытăсене çĕмĕрсе тăкнă. Урса кайнă самурайсене, кам çил акать, вăл тăвăл вырса илет, тенине манса кайнăскерсене, малашне те çавăн пекех çапса аркатăпăр, — тенĕ Ленинградри „Красный треугольник" савăт коллективĕн резолюцинче.

Йапони военщинин намăссăр провокацилĕ тапăнăвĕсене хирĕç ответлесе, ĕççыннисем хăйсен социалисăмлă тăван çĕршывĕн оборона тĕрекне вăйлатаççĕ, Осоавиахим речĕсене коллективлăн кĕреççĕ.

„Йапони самурайĕсем совет çĕрĕ çинче нихăçан та çӳрес çук,—теççĕ хăйсен резолюцинче Орджоникидзе крайĕнчи Моздок районĕнчи колхозниксем.—Йапони захватчикĕсен ирсĕр провокацийĕсене хирĕç ответлесе, епĕр Вис-çĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне çырăнна укçана срукчен тӳлесе тататпăр тата пур колхозниксене те пирĕн пек тума чĕнетпĕр. Кирлĕ пулсан, партипе правительствă чĕнсен, епĕр пурте, пĕр çын пек пулса, социалисăмлă тăван çĕршывшăн кĕрешекен бойецсен речĕсене тăратпăр".

(ТАСС).

Хăйсен сăмсисене пирĕн совет пахчине килсе ан чикчĕр

Шупашкар хула совечĕн пленумĕ йышăннă резолюци

Епĕр, Йапони военщини çĕвĕрĕн ирсĕр провокаци тунине пĕлсен, пит те тарăхса кайрăмăр. Йапони ирсĕр военщини вăрçă пуçарма провокаци тăвать, пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ вăрçă пуçарĕн çулăмне вĕрсе чĕртет. Фашисла тискер кайăксемшĕн вĕсем Испанире, Китайра вуншар пин мирлĕ халăха вĕлерсе йухтарнă йун çахал. Вĕсем мирлĕ политикăна çирĕп тытса пыракан, вăрçă чĕртекенсен чăн-чăн сăн-питне уçса палăртакан Совет Сойузне курайманççĕ. Тискер кайăксем касхине пирĕн „территори çине тапăнса кĕчĕç, пирĕн таса чикĕсене пăсрĕç. Ирсĕр фашиссем йăнăшрĕç. Йапони бандичĕсĕн куна хăратас политики пире хăратаймаст.

Епĕр шансах тăратпăр, пирĕн пархатарлă пограничниксем тата Рабочисемпе Хресченсен хăватлă Хĕрлĕ Çарĕ, Тинĕс-Çар Флочĕ, Хĕрлĕ Авиаци кирек хăш минутра та кирек мĕнле тăшмана та çапса саламтма хатĕр. Пĕтĕм Совет халăхĕ партипе правительствă тата аслă Сталин чĕнсенех хăйĕн таса чиккисене сыхлама пĕр çын пек хатĕр тăрать.

Йапони военщинин ирсĕр провокацине ответлесе, епĕр хамăрăн йуратнă социалисăмлă тăван çĕршывăн хăватне тата оборонă пултарулăхне тĕреклетессишĕн татах та вирлĕрех кĕрешетпĕр, хамăрăн политикăлла сыхлăха тата ытларах вăйлататпăр. Халăх тăшманĕсене—троцкиссене, бухаринĕçсене, буржуалă националиссене, йутçĕршыв разведкисен шпионĕсемпе диверсанчĕсене пĕр хĕрхенмесĕр тупса палăртатпăр. Йуратнă сталинла наркомĕ Йежов йулташ йертсе пыракан Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн оргăнĕсене куллен пулăшса пыратпăр.

Политикăлла тата производствăлла активлăха тата ытларах вăйлатса, производствăпа финанс планĕсене ытлашшипех тултарассишĕн большевикла кĕрешетпĕр. Коммуниссен большевикла партийĕ тавра, правительствă тавра тата халăхсен йуратнă çулпуçĕ Сталин йулташ тавра тата тачăрах петĕçетпĕр.

Епĕр хамăр правительствăран Йапони военщинин ирсĕр провокацине хирĕç чи татăклă мерăсем йышăнма ыйтатпăр, малашне вĕсем хăйсен сысналла сăмсисене пирĕн совет пахчине пырса чикме кăмăл ан пултăр.

Пирĕн территори çине тапăнса кĕнĕ Йапони—Манчжури бандичĕсене саланса каймалах отпор панă Хĕрлĕ йалавлă Инçет Хĕвелтухăç фронтĕнчи бойецсемпе командирсене хĕрӳлĕ салам йаратпăр. Хамăрăн пархатарлă пограничниксене хĕрӳлĕ салам йаратпăр.

Пирĕн таса чикĕсене сыхланă çĕрте хăйулисен вилĕмĕпе вилнĕ пархатарлă бойецсене хисеп те мухтав!

Сывă пултăр Рабочисемпе Хресченсен чаплă, никам çĕнми Хĕрлĕ Çарĕ тата Совет Сойузĕн пĕрремĕш маршалĕ Оборонăн хурçă наркомĕ Ворошилăв йулташ!

Сывă пултăр пирĕн Тинĕс-Çар Флочĕ, пирĕн Хĕрлĕ Авиаци!

Сывă пултăр Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ тата мирлĕх политикине çирĕп те тӳрĕ пурнăçа кĕртсе пыракан совет правительстви!

Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçĕ, социалисăмлă çĕнтерӳсен организатăрĕ тата çулпуçĕ, тăван аслă Сталин!

Епĕр йаланах хатĕр

Канаш районĕнчи Йăвашкасси йалĕнчи Доронин йачĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем августăн 6-мĕшĕнче Йапони фашисĕсен провокацине хирĕç аслă митинг туса ирттерчĕç. Митингра граждан вăрçинче кĕрешнĕ Куçмин йулташ çапла каларĕ:

— Епĕр хамăр халăхсен телейне, классăр социалисăмлă обществăна хайар кĕрешӳре, илтĕмĕр. Совет Сойузĕнчи халăхсем мирлĕ пурăнăçшăн, çĕнĕпе вĕсен телейĕ çине иртĕнсе кайнă фашиссен ура пуссан, вĕсене çĕр çинчен шăлса тăкăпăр. Пирĕн Ленинпа Сталин партийĕ тата Совет правительстви Совет çĕршывне тăшмансенчен хӳтĕлеме чĕнсен, епĕр йаланах хатĕр.

Колхозниксемпе колхозницăсем митингра йышăннă резолюцинче Йапони самурайĕсен провокацине хирĕç ответлесе, хирти тырпулсене пухса кĕртес тĕлĕшпе хăвăрт ĕçлеме, колхозра Осоавиахим ĕçне вăйлатма йышăнчĕç.

С. К.

1939 çулти Пĕтĕм Сойузри халăх перепиçĕ çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти йиулĕн 26-мĕшĕнче „1939 çулти Пĕтĕм Сойузри халăх перепиçĕ çинчен" йышăннă 859-мĕш №-лĕ постановлени тăрăх, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1. Чăваш АССР Халăх-хуçалăх учочĕн управленине çаксене тума хушас:

а) перепиç иртерекен пайсене,—йал-и выранĕсенче халăх-хуçалăх учочĕн инспектăрĕсем ĕçлекен районсемпе пĕр тĕлех килмеле, хуласенче вăтамран 8 инструктăр участкисене пĕрлештермеле туса,—организацилемеле.

б) халăх-хуçалăх учочĕн районсенчи тата хуласенчи инспектăрĕсен помошникĕсене тата перепиç иртерекен пайсен пуçлăхĕсене кашнине уйрăмăн Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çирĕплетме çак çулхи çĕнтабĕрĕн 1-мĕшĕччен тăратмала;

в) Шупашкăр хулинче кĕске срукла курс организацилесе халăх перепиçне иртерес тĕлĕшпе пĕлӳсене тĕрĕслемеле: халăх-хуçалăх учочĕн хуласĕнчи, районсенчи тата участкăсенчи инспектăрĕсене валĕçи,—ку ĕçе 1938 çулти нойабĕрĕн 1-мĕшĕнчен кайа йулмасăр туса иртермеле тата халăх-хуçалăх учочĕн хуласенчипе районсенчи инспектăрсен помошникĕсемпе перепиç иртерекен пайсен пуçлăхĕсене, вĕсем халăх-хуçалăх учочĕн инспектăрĕсем маррисене валĕçи,—ку ĕçе 1938 çулти нойабĕрĕн 20-мĕшĕнчен кайа йулмасăр туса иртермеле;

г) инструкцилемеле тата пĕлĕвĕсене тĕрĕслемеле: перепиç иртерекен пайсен пуçлăх заместителĕсенне—1938 çулти нойабĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20 мĕшĕччен, инструктăр-контролорсенне тата счетчиксенне—1938 çулти декабĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа декабĕрĕн 31-мĕшĕччен;

д) Чăваш АСС Республикинче халăх перепиçне иртермели плана хатĕрлесе, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советне çирĕплетме тăратмала.

2. Чăваш АСС Республикĕнчи райĕçтăвкомсене, хула совечĕсене тата Халăх-хуçалăх учочĕн управленине перепиç иртерекен пайсен пуçлăх заместителĕсене, инструктăр-контролорсене тата счетчиксене тупма халех тытăнма хушас,—вĕсене, хушса тӳлемели условипе, шкул работникĕсенчен, совет учрежденисенче, суту-илӳ организацисенче ĕçлекенсенчен, аслă шкулсемпе вăтам шкулсен аслă класĕсенче вĕренекенсенчен, предприйатисемпе совхозсен тата колхозсен учот-счот ĕçне тăвакансенчен тата кантурсенче ĕçлекенсенчен, политикă тĕлĕшпе шанчăклă, çав ĕçе тума пултарулă çынсене суйласа илмеле,—вĕсене кашнине уйрăммăн çирĕплетес ĕçе 1938 çулти октăбĕрĕн 1-мĕшĕнчен кайа йулмасăр туса çитермеле.

3. Халăх-хуçалăх учочĕн районсенчи инспектăрĕсен пур районсенче те (пур хуласенче те) 1939 çулти халăх перепиçне иртермели организациллĕ конкретлă план тума халех тытăнмала, çав плансене çирĕплетме райĕçтăвкомсен президиумĕсене (хула совечĕсене) тата Чăваш АССР Халăх-хуçалăх учочĕн управленине тăратмала.

4. Хула тата поçолкă совечĕсене 1938 çулти августăн 15-мĕшĕнчен кайа йулмасăр плошчĕдсен, урамсен, переулăксен, садсен тата бульварсен йачĕсене, çуртсемпе хватерсен номĕрĕсене йĕркелесе çитерме хушас, çав ĕçе тунă чухне килекен тата кайакан халăх çинчен милици оргăнĕсене вăхăтра çыртарасси çине уйрăмах çавăрăнса пăхмала.

5. Райĕçтăвкомсен, хула, поçолкă тата йал совечĕсен председателĕсене советсем, пур предприйатисем, совхозсем, колхозсем, учрежденисем, шкулсем, урам комитечĕсем т. ыт. çумĕнче, 5—9 çынлă составпа, 1939 çулти халăх перепиçне иртерме пулăшакан комиççисене организацилеме хушас,—комиççисенче—совет, комсомол, профсойуз тата обшчĕствăлла организацисен представителĕсем пулмала.

6. Чăвашавтогужтреста тата Çыхăну управленине халăх перепиçне иртерессипе çыхăнса тăракан грузсене пĕр чăрмавсăр тата пысăкăшне пăхмасăр йышăнма тата вăхăтра çитерсе пама хушас.

7. Райĕçтăвкомсене тата хула совечĕсене халăх-хуçалăх учочĕн районсенчи, хуласенчи тата участкăсенчи инспектăрсене мĕнле сăлтавпа та пулин кирек йепле урăх ĕçе куçарма чарас, çавăн пекех тата вĕсене халăх перепиçне иртерме хатĕрленессипе йе хăйсен тĕп ĕçĕпе çыхăнса тăман ĕçпе командировкăна йарассинчен пĕтĕмпех хăтарас.

8. Чăваш АСС Республикĕнче халăх перепиçне иртерме хатĕрленес ĕçсене вăхăтра тăвассишĕн тата халăх перепиçне иртерессишĕн ответлăха Чăваш АССР Халăх-хуçалăх учочĕн управлени начальникĕ А. С. Çемонăв çине хурас.

9. 1939 çулти халăх перепиçне иртерме хатĕрленес çĕрте—пулас перепиç политикă тата халăх хуçалăхĕ йенĕпе мĕнле выранă йышăнса тăнипе унăн задачисем çинчен халăха анлăн ăнлантарса парасси калама çук паха пулса тăрать. Çак ĕçе совет, комсомол, профсойуз тата ытти обшчĕствăлла организацисене пурне те пĕтĕм совет обшчĕственнăçне хутшăнтармала.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ республикăри тата районсенчи организацисене, йал совечĕсене, колхозсен правленийĕсене пулас халăх перепиçĕ çинчен ăнлантарассине тĕплĕн организацилеме, çак ĕçре агитатципе пропагандăн пур майĕсемпе те (пичет, радио, кино, пухусем т. ыт. те) усă курма чĕнет.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ А. Ъолкăв.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхакан Н. Жукăв.

Шупашкăр хули, 1938 çул, августăн 5 мĕшĕ.

Осоавиахим членĕсем мобилизацилĕ хатĕр тăраççĕ

Августăн 8-мĕшĕнче Шупашкар хулинче Осоавиахим членĕсемпе хулари ĕççыннисен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура 1 575 çын пулчĕç. Пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен доклад тата Йапони военщинин çĕнĕрен ирсĕр провокацисем туни çинчен пĕлтернине итлесен, пуху çакăн пек резолюци йышăнчĕ:

„Епĕр, Осоавиахим членĕсем, пĕтĕм ĕççыннисемпе пĕрлех Йапони военщини Йапоние Совет Сойузне хирĕç вăрçа туртса кĕрес тесе туса иртерекен провокацисемшĕн хайаррăн тарăхатпăр.

Халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ „Епĕр миршĕн тăратпăр тата мир ĕçĕшĕн ĕçлетпĕр. Анчах епĕр çине йунависенчен хăрамастпăр, вăрçă чĕртсе паракансем çапни çине çапипех ответ пама хатĕр тăратпăр"—тесе каланине епĕр лайăх астăватпăр, ăна нихăçан та манмастпăр.

Епĕр Совет правительстви йышăннă çирĕп позицине ырлатпăр, хăйсен сысналла сăмсине совет пахчине килсе чикекен Йапони самурайĕсене малашне те аркатса ыйтса малах отпор пама ыйтатпăр.

„Хамăрăн Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота, Хĕрлĕ Авиацине, Осоавиахима пур майсемпе те вăйлатни тата тĕреклетни кирлĕ. Нимĕнле „ăнсăртлăх" та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен пырса ан тивччĕр тесе, хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала..." Сталин йулташăн çак аслă кăтартăвĕсене асра тытса, епĕр Шупашкар хулинчи мĕн пур ĕççыннисене предприйатисенче, учрежденисенче, колхозсенче Осоавиахим ĕçне вăйлатма чĕнетпĕр.

Йапони самурайĕсем çакна пĕлсе тăччăр, тата нихăçан та ан манччăр: ССР Сойузĕ—вăл ĕлĕкхи патша Российĕ мар. Совет Сойузĕнчи халăхсем хăйсен тăван çĕршывне, хăйсен большевиклă партине тата хăйсен çулпуçне Сталина чунтан-чĕререн йуратаççĕ, çавăнпа та вĕсем нимĕнле тăшмана та—Йапони военщинине те, Германи фашисĕсене те—хамăрăн таса чиккисене пăсма нихăçан та ирĕк парас çук".

Кĕраки валĕçи варлăх хатĕр

ТРАК. Алманчри „12 лĕт Октябрь" колхоз уйри тырпула пуçтарса кĕртес ĕçе вăрăма ярас мар тесе, мĕн кирлисене малтанах хатĕрлесе пывă. Колхозниксем тырă вырма тухнă кунрах ача йаçли, столовăй ĕçлеме тытăнна. Уйра ĕçлекен колхозниксене валĕçи вĕретнĕ шыв хатерлесе тăнă. Миронăв избач, колхозниксем канна хушăра, тĕнчери лару-тăру çинчен хаçатсем тăрăх каласа панă. Кашни виçĕ кунта пĕрре стена хаçачĕ кăларса тăраççĕ. Ĕçре социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса пынипе стахановла ĕçлекенсен йышĕ те ӳссе пырат.

Колхоз кĕрхи тырăсене парса государства умĕнчи обйазательствăна пурнăçланă. Кĕраки валĕçи кирлĕ таранах вăрлăх çапса хатĕрленĕ.

И. Васильйĕв.

Гектартан 22 центнĕр тулă

ВĂРНАР. Иртнĕ çуркунне Туçи Мăратри „Клевер" колхоз членĕсем гектартан 20 центнĕртан кайа мар тĕштырă туса илме обйазательствă илнĕ. Колхозниксем хăйсем çине илнĕ обйазательствăна пурнăçа кĕртес пирки агротехникăлă ĕççене пурне те пурнăçласа пыма тăрăшнă. Вăйлă тырпулшăн кĕрешни ахаль пулман. А. Степанăв бригади кашни гектар çинчен 22 центнĕр, Воробйов бригади 20 центнĕр кĕрхи тулă пуçтарса кĕнĕ.

С. Николайĕв.

Политикăлă-массăлă ĕç уй-хирте

Хĕрлĕ Чутай районĕнче вулав çурчĕсем 29, колхоз клубĕсем 4, хĕрлĕ кĕтессем 2 ĕçлеççĕ. Уйри тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра районри вулав çурчĕсемпе колхозсенчи клубсем хăйсен ĕçне уй-хире куçарчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе анлăн сарса йачĕç.

Уйрăмах Пантăкри (избач Кадейкин), Трапайри (избач Романăв), Атнарти (избач Йефимăвă), Тури Вылари (избач Катейĕв) вулав çурчĕсем аван ĕçлеççĕ. Çак асăннă вулав çурчĕсенче ĕçлекен йулташсем колхозниксене РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен Пĕрремĕш Çессийĕн ĕçĕсем çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен тĕплĕн каласа ăнлантараççĕ.

Çавăн пекех тĕрлĕрен илемлĕ произведенисене те вуласа параççĕ. Бригадăсенче стена хаçачĕсем кăларма пулăшаççĕ. Хырпукассинче, избач Морозăв пулăшнипе, бригадăсенче 15 номĕр стена хаçачĕ кăларнă. Канна вăхăтсенче колхозниксем патефон выляннине итлеççĕ, хаçат-журналсем вулаççĕ т. ыт. те.

Е. Самарин.

Лайăх ĕçлекен вулав çурчĕсем

ЕЛĔК. Районра чылай вулав çурчĕсем уй хир ĕçе вăхăтĕнче культурăлă массăлă ĕçе анлăн туса пыраççĕ. Акă самаха, Елĕк йалсоветĕ çуменчи вулав çурчĕн пуçлăхĕ Т. Волкав колхозниксем патне уйа тухса канна вăхăтра хаçат-журналсем вуласа парат, ЧАССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессин материалĕсемпе паллаштарат, калаçусем ирттерет, патефон калаттарат т. ыт. те.

Хирлепусĕнчи вулав çурчĕн пуçлăхĕ Васильйĕв кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче бригадăсене хаçатсем вуласа пама çӳрет. Стена хаçачĕ кăларас ĕçре редколлеги членĕсене пулăшат.

Çавăн пекех Хитекушăкĕнчи вулав çурчĕн пуçлăхĕ те лайăх ĕçлет. Вал тăрăшнипе уйра радио тăрăх паракан хыпарсене итлессине организациленĕ.

Лайăх ĕçлекен вулав çурчĕсем районра татах та пур.

В. Йефремăв.

Пĕтĕмпех суртлă вăрлăхпа акаççĕ

ЕЛĔК. Йуманлăхри Буденный йачĕпе тăракан колхозăн кăçал 78 гектар ытларах ыраш, 18 гектар тулă акса хăвармала. Кĕраки тумали вырăна 2540 лав тислĕк кăларнă, 60 гектар çинче ирхи çĕртме тунă. Колхоз кăçал йалтах суртлă вăрлăхпа тата машинăсемпе акат. Пайанхи куна илсен, колхоз акмали вăрлăхсене пĕтĕмпе 70 центнĕр хатĕрленĕ. Анчах вăрлăхсене чӳкемели имçамсене кӳрсе килмен. Акнă вăхăтра вăрлăхсене уйа камăн илсе тухмалине палартса хуман. Кĕраки çиtiччен вăрлăхсене кирлĕ таранах хатĕрлесе хумала.

А. М. Орлов.

Выльăх ĕрчетмели плана ытлашшипех тултаратпăр

Уйкас Йунтапари „Çĕнĕ пурнăç" колхозри (Трак р.) таварлă сĕт-çу фермин виççĕмĕш çул ĕнтĕ государствăна обйазательнăй йĕркепе сĕт-çу районта чи малтан парса татса пырат. Кăçал та июлĕн 16-мĕшне 1938 çулшăн сĕт-çу памали плана ытлашшипех тултартăмăр.

Государствă умĕнчи парăма вăхăтра парса татнă хыççăн, уйри тырпула пуçтарса кĕртме тухнă кунранпа, ача площадкинчи 64 ачана, пĕрлешӳлĕ столовăйсенче 200 çынна сĕт-çу парса тăтăмăр. Кунсăр пуçне кӳршĕри колхозниксене те укçала сутатпăр.

Колхозра МТФ организацилеччен ĕнесĕр хуçалăхсем те сахал марччĕ. Енĕр, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государства панă плана вăхăтра тултарса пырса, ĕнесĕр хуçалăхсене ĕнелĕ туса пытăмăр.

Колхозăн государствă планĕ тăрăх 1939 çулхи йанварĕн 1-мĕшне лаша выльăхсем 90 пуç пулмала пулсан, халь 95 пуçа çитерне. Мăйракалă шултра выльăхсем 55 пуç пулмала, халь 62 пуç. Перлештернĕ сурăхсем ăратлă такасемпе 29 пуç пулмала, халь 52 пуç шутланат. Сыснасем 12 пуç пулмала, халь 40 пуç пур. Çапла вара колхозăн государства планĕ тăрăх пĕтĕмпе пĕрлештернĕ выльăхсем 190 пулмала пулнă, халь 247 пуç шутланат.

Колхозра выльăх-чĕрлĕх ытларах ĕрчетес тĕлĕшпе МТФ бригадирĕ Ф. Михайлăв йулташ хĕрӳллĕн кĕрешет. Сăвнашкалах К. Никитина, Н. Йаблочкина, П. Чернова дойаркăсем те тăрăшса, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

„Çĕнĕ пурнăç" колхоз председателĕ Н. Илйин.

Государствăна аш-какай парса татрăмăр

Трак районĕнчи Степан Равин йачĕпе тăракан колхозăн сысна ферминче государствă панă план тăрăх 1939 çулхи йанварĕн 1-мĕшне 85 пуç сысна пулмала. Государствă планне тултарас тĕлĕшпе ферма бригадирĕ Н. Федăрăв тата сысна пăхакансем М. Никифăрăв, М. Фомин йулташсем тăрăшса ĕçленипе фермăри сыснасен йышне 249 пуçа çитернĕ. Вĕсенчен: 24 ама, 186 çура. Кăçалхи çурăсенчен пĕри те вилни пулман.

Фермăн государствăна 45,5 центнĕр аш-какай памала пулнă, июлĕн 25-мĕшне пĕтĕмпех парса татнă. 1939 çулшăн 1,5 центнĕр панă. Государствăна аш-какай парса татнă хыççăн, колхозниксем пысăк льгота илчĕç.

Кунсăр пуçне кашни колхознике фермăран сысна çурисем панă. Халь колхозра сысна усраман хуçалăхсем çук.

Кăçал фермă 9 пин тенкĕ ытларах тупăш панă та ĕнтĕ. Колхозниксем кăçал ĕçкунĕ тăрăх чылайах укçа-тенкĕ илессе ĕмĕтленеççĕ.

Н. Спиридонăв.

Пĕрремĕш бригада малта

СĔРПӲ. Кăшаркассинчи „Пионер" колхоз тырпулсене йалтах вырса пĕтерне. Колхозра халĕ кĕлте кĕртеççĕ, аван çапаççĕ, государствăна тырă параççĕ. Пĕрремĕш бригадари колхозниксем ытти бригадăсенчен малта пыраççĕ. Вĕсем августăн 8-мĕш тĕлне тулă, сĕлĕ, пăрçасене çапса пĕтерне. Çав вăхăтрах иккĕмĕшпе виççĕмĕш бригадăсем пур ĕçре те йулса пыраççĕ. Çуртри кĕлтисене кĕртме, аван çапма та пуçăнман. Илйинпа Родионăв бригадирсем колхозниксем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсене 8 уйăх хушши ĕçкĕнĕкисем çине лартса паман.

А. Иванов.

Ферма ĕçне лайăх йĕркеленĕ

Тури Ачакри „Крестьянская газета" (Йĕтĕрне р.) таварлă сĕт-çу ферминче пурĕ сăвакан ĕнесем 31, вăкăрсем 4, хĕл каçнă пăрусем 19, кăçалхи пăрусем 27. Ĕнесене кунта лайăх пăхаççĕ, çавăнпа вĕсем сĕт те нумай параççĕ.

Акă, „Красуль" ĕнерен дойаркăнна Йефимăвă кунне 15-шер литр сĕт суса илет. „Машка", „Бельк" ĕнесем 12—14-шар литр сĕт параççĕ. Фермăри пăрусене комсомолка П. Андоейĕва уйрăмăнах аван пăхат. Вăхăтра апат парат, шăварат, усăлтарса çӳретет. Çав майпа „Гудок" йатлă пăру талăкра 900 грам, „Венера"—800 грам, Воин"—750 грам, „Наредка"—750 грам хушăнаççĕ. П. Терентйĕвăпа Х. Герасимăвă ĕнесене йуратса пăхаççĕ. Фермăра ĕçлекенсем санитарипе ветеринари йĕркисене ĕрĕс пăхăнса ĕçлесе пыраççĕ.

Кормушкăсене час-часах çуса тасатса, хĕвеле кăларса уç ларттараççĕ. Ĕнесен айĕсене тасатсах тăраççĕ.

Фермă государствăна сĕт-çу парас плана çак кунсенчех тултарат. Фермăра библиотекă пур. Вал библиотекăра ĕнесене тата пăрусене мĕнле пăхмали тата вĕсен чирĕсем çинчен калакан кĕнекесем чылай. Вут кавартан сыхланассине те лайăх йĕркеленĕ. Çуртсем çумне катка-пичкесемпе шывсем лартнă, шыв витрисем çакса хунă. Фермă тĕлне икĕ метр таранĕш пĕве пĕвеленĕ.

С. Кондуктăрăв.

Ексĸурçине кайаççĕ

Чăпта сойузĕ кăçал хăйĕн системинчи стахановецсенчен чылайĕшне премни шучĕпе Мускавпа Ленинград хулисене ексĸурçине йарат. Çак кунсенче 8 стахановец Мускава ексĸурçине кайса килнĕ. Мускавра вĕсем пилĕк кун хушши пулнă. Çентабĕрĕн 3-мĕшĕнче 20 стахановец Ленинграда ексĸурçине кайаççĕ. Вĕсемпе пĕрле Ленин хулине Чарпуç (Шăхасан районĕ) промартелĕнчи паллă стахановец Никита Артемйĕв та кайат.

Леванта тата Каталонине паттăрăн хӳтлени

(Испанири вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Апрел уйăхĕн варринче Вăтаçĕр тинĕс патне тухса, фашисла пăлхавçăсемпе интервентсем хăйсен умне Каталонине тата Леванта — Испанири пуйан, çын нумай пурăнакан облăçсене туртса илес тĕллев лартнă, ку ĕнтĕ вĕсен тĕп задачи пулнă. Çавăнпа пĕрлех Каталони республикăлă Испанин индустрилĕ тĕп бази, Левант — йалхуçалăхлă тĕп базă пулса тăраççĕ.

Фашиссем Каталонине шалала, Тортосă патĕнчен çурçĕрелле тата Лерида патĕнчен хĕвелтухăç йеннелле куçса кĕме темиçе хут та хăтланчĕç, анчах вĕсем ăна тăваймарĕç. Республикă çарĕсем Ебропа Сегре (Еброна йухса кĕрет) йуханшывĕсен хĕвелтухăç йенчи çыранĕсем çинче тĕреклĕн çирĕпленсе тăчĕç.

Вара фашиссем урса кайсах Левант çине тапăнчĕç. Унта фашиссем калама çук пысăк вăй тата вăрçă техникин пит нумай, республиканецсенинчен тем терийех нумай средствисене пухса тăнă. Çапла майпа вĕсем Сагунто тата Валенçи патне çăмăллăн та хăвăрт çитме ĕмĕтленнĕ.

Республикă çарĕ, Левантри тата пĕтĕм республикăлă Испанири халăх анлăн пулăшни çине тайăнса, фашиссене хирĕç калама çук вăйлăн тăрас ĕçе организацилеме пĕлчĕ. Левантăн кашни метр çĕрне илмешĕн фашиссен калама çук пысăк тăкак тума тивет. Винароз хули (çав хула районĕнче вĕсем Вăтаçĕр тинĕс патне тухнă) патĕнчен Кастельйон патне çитме фашиссене икĕ уйăх вăхăт кирлĕ пулнă. Ун хыççăнхи икĕ уйăх хушшинче фашиссем наступлени туса Нулес патне (ку хуша Винарозран Кастельйон патне çити хушăран 4 хут пĕчĕкрех) çити кăна куçнă.

Леванта хӳтлекен паттăрсене хĕвелтухăç (Каталони) фронтĕнчи бойецсем пысăк пулăшу пачĕç. Июлĕн 25-мĕшĕнче вĕсем вăйлă наступлени пуçларĕç, çакна пула фашиссен командованийĕн Левант фронтĕнчи тĕп вăйĕсене (вăл шутра аншлюса пĕтĕмĕшпе пекех) Ебро шывĕн анат вĕçĕнчи районне куçарса пымала пулса тăчĕ. Ку çеç те мар-ха, фашиссен Кантăр (Естремадурă) фронтĕнчен те сахал мар вăй илсе каймала пулса тăнă. Республиканецсем Ебро йуханшывĕн районĕнче йышăннă территорине кайала туртса илес тĕлĕшпе фашиссем хайар контратакăсем тăваççĕ, анчах республикă çарĕсем вăл контратакăсене ăнăçлăн сĕмĕрсе тăраççĕ.

Левант фронтĕнчи тата хĕвелтухăç фронтĕнчи çапăçусем республикăри пур тĕрлĕ çарсен те çапăçу тĕрекĕ татти-сыпписĕр ӳссе пынине, вĕсем çине тăрса пит пысăк паттăрлăхпа кĕрешнине тата тепĕр хут кăтартса параççĕ. Хайар çапăçусенче пиçĕхсе çирĕпленсе республикă çарĕн дивизийĕсем оборонăлă тата наступленилĕ çапăçу йăвăр искусствине ăнăçлăн алла илсе пыраççĕ.

Валенçипе Барçелонă патне çĕмĕрсе тухма фашисла интервентсемпе пăлхавçăсем пĕр хут çеç мар хăтланса пăхĕç, ун пирки иккĕленмели çук. Анчах республикăлă Испани çителĕклĕ вăйлă, вăл хăйĕн фашиссене хирĕç тăрас хăватне вăйлатма пултарат çеç мар, вăл татăклă та çĕнтерӳлĕ наступленийе куçмалли условисене туса хатĕрлеме те пултарат.

(ТАСС).

Хут пĕлменнисене вĕрентеççĕ

Çĕрпӳри тӳмесем тăвакан хапрăкра июлĕн 10-мĕшĕнчен хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсен шкулĕ ĕçлеме пуçланă. Шкулта 13 çын вĕренеççĕ. Вĕсене Д. Артемйĕв учител вĕрентет.

Çитĕннисен шкулĕнче вĕренекенсене пур йенчен те лайăх услови туса панă. Хут кăранташсем, кĕнекесем çителĕклĕ. Тата тĕрлĕрен хаçат-журналсем кирлĕ чухлĕ çырăнса панă, вĕренекенсен пӳлĕмне радио кĕртнĕ. Шкул çумĕнче çак 13 çын валĕçи уйрам столовăй организациленĕ.

Октябĕр револьуци 21 çул тултарнă тĕле тӳме хапрăкĕнче хут пĕлмен çын пулмаст. Хут пĕлменнисен шкулĕнче вĕренекенсем аслă уйăв тĕлне хут лайăх пĕлекен пуласшăн тăрăшаççĕ.

В. Васильйĕв.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ çывхарнине туймаççĕ

Вĕренӳ çулĕ çывхарса килнĕ май кĕнеке магазинĕсене шкул ачисем ытларах пыма пуçлани палăрат. Ачасем вĕренӳре кирлĕ хатĕрсем туйанасшăн.

Канашри тата Шăхасанти кĕнеке магазинĕсем çĕнĕ вĕренӳ çулĕ çывхарса килнине туймаççĕ. Учебниксем, тетрадсем, кăранташсем тата ытти вĕренӳре кирлĕ хатĕрсем кӳрсе килессем çинчен кунта ĕçлекенсем аса та илмеççĕ пулас. Шăхасанти магазинра, 8—9 классенче вĕренмели физикă задачникĕсĕр пуçне, урăх нимле учебник та тупса илме çук.

Кĕнеке магазинĕсем çĕнĕ вĕренӳ çулне вĕренӳре кирлĕ хатĕрсене çителĕклĕ кӳрсе килнипе кĕтсе илмеле.

А. Дмитрийĕв.

Критика тата библиографи

Массăллă çар библиотеки

1914—1918 çулсенчи империалисăмла вăрçăн йулашки пăшал сассисем чарăннăранпа çирĕм çул иртрĕ. Унтанпа ĕнтĕ çĕнĕ ăру ӳссе çитĕнчĕ. Анчах етемлĕх çав тискер вăрçăн урокĕсене маннам-ха. Халĕ тĕнче çĕнĕрен империалисăмла пысăк вăрçăн тĕпсĕр хăрушлăхĕ умĕнче тăрат, вăл хăрушлăхăн чи çивĕч йенĕ Совет Сойузĕ çинелле çавăрăннă. Фашисла пусмăрçăсен пĕтĕм тĕнчери банди пирĕн аслă социалисăмла государствă—пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен тăван çĕршывĕ—пуррине тата вăл чечеклене пынине нийепле те килĕшме пултараймаст.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ „нимĕнле „ăнсăртлăх" та тата пирĕн тулашри тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен пырса антивччĕр тесе, хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала..." (Сталин).

ССРС Оборонă Халăх Комиссариачĕн Государствă çар издательстви кăларакан массăлă çар библиотеки шухăша вăрçă хăрушлăхĕ тавра мобилизацилет, пирĕн çĕршыври ĕççыннисен анлă массисем хушшинче çар пĕлӳне ӳстĕрме пулăшат.

Вăл библиотекăри брошӳрăсем вулакана кучченехи çар техникипе, вĕсемпе вăрçăра усă курмали майсемпе тата меслетсемпе кĕскен паллаштараççĕ.

„Çăмăл стрелковăй оружи" йатлă брошӳрăра винтовкă, алăпа тытса пемелли пулемет, граната тата гранатомет мĕнле пайсенчен тăнине тата вĕсем мĕнле ĕçленине ăнланмала та интереслĕ чĕлхепе каласа панă. Çавăнпа пĕрлех вăл хĕçпăшалсем вăрçăра мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине конкретлă историлĕ примерсемпе кăтартса панă. Автăрсем вулакана хĕçпăшалла тĕл пеме вĕренни питĕ кирли çинчен, тĕл перекен—тăшмансене хирĕç хăватлă вăй тата пирĕн совет чиккисене шанчăклă хуралĕ пулни çинчен тĕплĕн ăнлантараççĕ.

Станковăй пулемет, батальйон туппи тата миномет мĕнле пайсенчен тăнине, вĕсем мĕнле ĕçленине „Йăвăр стрелковăй оружи" йатлă брошӳрăра каласа панă. Батальйон артиллерийĕ, минометсем тата йăвăр пулеметсем—çапăçмали хăватлă хĕçпăшалсем пулса тăраççĕ. Империалисем çакна 1914—1918 çулсенчи вăрçă опытĕнчен ăнланса илнĕ. Вĕсем хăйсен çарĕсене тапăнмали тата хӳтĕленмели çав хатĕрсемпе хĕçпăшаллантарма пур мерăсене те йышăнна.

Хальхи вăхăтра буржуаллă пысăк государствăсен çарĕсенчи стрелковăй дивизисенче пуринче те йăвăр тата çăмăл пулемет 300—400 шутланаççĕ. Çавăн пек хĕçпăшаллă вăйăн пайĕпе хăватне çăмăллăн ăнланма пулат. Калăпăр, 400 пулеметпа хĕçпăшаллантарнă дивизи 4 километр сарлакăш çĕр çинче тапăнса пырат. Ун чух кашни километр çине 100 пулемета йакăн тивет. Урăхла каласан, кашни 10 метр сарлакăш çĕр çине минутне 150—250 хут персе йаракан пулемет пулат. Çав пулеметсем лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ тата опытлă стрелоксен аллинче пулсан мĕнлерех хăватлă тăкалан çăмăрĕ çутарасси уççăнах курăнат. Паллах, вĕçĕмсĕр тăкăнса тăракан пульăсем хирĕç тапăнса пыракан стрелоксене малалла куçма йăвăрлатаççĕ. Вĕсене ытти çар пайĕсем пулăшмасан, туса иртерекен тапăну чи татăклă минутра „хупланса" ларма пултарат.

Çарсем малалла куçассине çăмăллатма артиллери пулăшат, вăл хăйĕн хăватлă тата инçене персе йаракан снарйачĕсемпе тăшман пулемечĕсене çĕмĕрет, вĕсем пирĕн çарсене тăрассине чарса лартат. Артиллери мĕнле хăватлă вăй пулни тĕнче вăрçи вăхăтĕнчех палăрнă. Вăрçă хирĕсем вăл вăхăтрах тупă сассисем вĕçĕмсĕр кĕрленипе палăрса тăнă, тăшман позицийĕсем çине вăл вăхăтрах артиллери хăватлă снарйадсемпе персе тăнă.

Кучченехи вăрçăра артиллери чи паллă вырăнсенчен пĕрне йышăнни тĕнче вăрçи хыççăн уççăнах палăрчĕ. Империалиссем ăна малалла аталантарма пур мерăсене те йышăнчĕç. Çапларах хальхи вăхăтра артиллери ытларах инçене перекен, вырăнтан вырăна хăвăрт куçса çӳрекен пулчĕ, унăн снарйачĕсем тĕл тивекен тата вăйлă çĕмĕрме пултаракан пулчĕç.

Авиаци тата танксем аталанса пыни артиллери хакне нимĕн чухлĕ те пĕчĕклетмест. Унтан та ытларах, çав майсем ӳссе пынипе артиллери тата пысăкрах вырăн йышăнчĕ. Артиллери тăшман авиацийĕпе тата танкĕсемпе кĕрешмеле. Вăлах тата хăйĕн çурав çарне пулăшмала, хăйĕн танкĕсене çул уçса памала, хăйĕн авиацийĕ валли ирĕклĕн çапăçмали май туса памала. „Артиллери,—тет Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Сойузĕн маршалĕ К. Й. Ворошилăв йулташ,—танксемпе авиаци пек тăшмана çĕмĕрмели çĕнĕ вăрçă хатĕрĕсем пур пулсан та, кучченехи вăрçăра тĕп çарсенчен пĕри пулат. Çакăн пек пулнине Испанири вăрçă тата Йапонипе Китай вăрçи лайăх çирĕплетеççĕ. Хаçат-журналсем çырнă тăрăх, унти вăрçă операцисенче артиллери тĕп вырăнсенчен пĕрне йышăнат*).

Кучченехи артиллери мĕнле пулни çинчен, вăл мĕнле ĕçлени çинчен, вăрçăра вăл мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен „Артиллери" йатлă брошӳрăра питĕ ăнланмалла каласа панă.

„Артиллери тата ПВО" йатлă брошурă пысăкăн интереслентерет. Тĕнче вăрçинчен авиаци пит йĕрипен аталанса пынă. Пысăк нахалăхлă самольотсемшĕн кĕрешесси уйрăмăнах вăрçă хыççăн анлăн сарăлса кайрĕ. Кучченехи çар самольочĕсем тĕнче вăрçи вăхăтĕнче пулнă самольотсенчен питĕ нумай уйăрăлса тăраççĕ.

„Тĕнче вăрçи пĕтнĕ тĕле—тенĕ брошӳрăра,—самольотăн вăтам хăвăртлăхĕ сехетре 180—200 километра йахăн çеç пулнă. Кучченехи çар самольочĕсен вăтам хăвăртлăхĕ сехете 350—400 тата ытларах километра çитет, йатарласа хăвăрт вĕçме тунă самольотсен рекордлă хăвăртлăхĕ сехетре 700 километра та çитет" (стр. 4).

Самольотсен вĕçев хăвăртлăхĕ ӳснипе пĕрлех вĕсем сывлăшра вăрах тытăнса тăрасси те ӳсре. Тĕнче вăрçи вăхăтĕнче самольотсем сывлăшра 3—5 сехет аран-аран тытăнса тăма пултарнă, халь вĕсем темиçе вуншар сехет хушши пĕр анса лармасăр, темиçе пин километр тăршшĕ вĕçме пултараççĕ.

Брошӳрăра авиаци моторĕсем тăвас ĕçре тата авиацийе хĕçпăшаллантарас ĕçре тунă питĕ пысăк çитĕнӳсем çинчен каласа панă. Тĕнче вăрçи вăхăтĕнче пуринчен ытла 50, 100 тата 300 килограм йăвăрĕш бомбăсемпе усă курнă пулсан, халь авиаци 50 килограмран пуçласа 1.000 килограм йăвăрăшне çити бомбăсемпе усă курат.

Хальхи самольотсем, йатарласа тунă оборудовани пулăшнипе, хăт мĕнле çантаçăк пулсан та тата кăнтăрла та çĕрле те вĕçме пултараççĕ.

Çак сведĕнисемпе паллаштарнă хыççăн, разведкăна çӳрекен самольотсем, истребителсем, бомбардировщиксем тата штурмовиксем мĕнле ĕçлени çинчен автăрсем тĕплĕн ăнлантарса пăраççĕ. Брошӳрăн иккĕмĕш пайĕнче сывлăшран тапăннинчен мĕнле сыхланмали çинчен калать. Ку пайĕнче вулакан сывлăшран тапăннинчен сыхланмали (ПВО) командисене организацилессипе, вăл командăсен обйазанносĕсемпе, сывлăшран тапăннă вăхăтра хăрăрлăй тĕллĕн сыхланмалли пулăшакан ушкăнсем [illegible] мĕн тумаллине паллаштарат.

Çĕршывăн тылĕ тăшмана илĕртекен вырăн пулса тăрат. Вăрçă пуçлансан малтанхи кунсенчех тăшман пысăк сăвăтсемпе хапрăксене çĕмĕрсе такма, транспорт ĕçне тата промышленнăç ĕçĕсене те чарса лартма тăрăшат. Акă мĕншĕн ĕнтĕ тыла сывлăшри тăшманран сыхласси пирĕн аслă тăван çĕршыври кашни гражданинăн тивĕçĕ пулса тăрат. Совет Сойузĕнчи ĕççыннисем сывлăшран тапăнассинчен сыхланмали майсене пĕлсе тăмала. Енĕр кашни хулана, кашни сăвăтпа хапрăка, кашни колхозпа совхоза никам пырса тĕкĕнеймен крепăç туса хумала. Апла тăвас тесен сывлăшран тапăнассинчен сыхланассине мĕнле организацилемеллине, тăшман килсе лексен хуна ху мĕнле тытмалине пĕлмелле. Çавсем çинчен пурин çинчен те çӳлте асăннă брошӳрăна вуласан пĕлме пулат.

„Тинĕс Çар Флочĕ" йатлă брошӳра та питĕ усăллă. Пирĕн тăван çĕршыв чиккисен питĕ пысăк пайне, 40 пин километр тăршшĕне йахăн тинĕссем хупăрласа тăраççĕ. ССР Сойузĕн тинĕс чиккисене сыхлас ĕç çине большевиксен парти тата правительствă питĕ пысăк тимлĕхпе пăхаççĕ. Пирĕн тинĕсри хăвата çирĕплетме Тинĕс Çар Флочĕн Халăх Комиссариатне тунă.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Молотăв йулташ, 1938 çулхи йанварĕн 15-мĕшĕнче ССРС Верховнăй Совечĕн 1-мĕш созыври сессийĕнче çапла каланă: „Пирĕн совет стройĕ хăватлă, вăл татах те хăватлăрах пуласшăн, тăшмансемшĕн ниăçан пырса тĕкĕнмеле мар пуласшăн. Çапла пултăр тесен пире вăйлă Хĕрлĕ Çар кирлĕ тата вăйлă Тинĕс-Çар Флочĕ кирлĕ. Хăватлă совет державин хăйĕн интересĕсене тивĕçлĕ, пирĕн аслă ĕçе тивĕçлĕ тинĕс тата океан флочĕ пулмала".

Çавăн пек флот пирĕн пулат, мĕншĕн тесен ăна тума партипе правительствă шутлаççĕ, ăна тума пирĕн Сталин йулташ шутлат. Тинĕс флочĕ тăшмансемшĕн епĕр ăлĕсене пĕр усмасăр ĕçлемеле, епĕр пирĕн тăван çĕршывăн чăпне ӳстермели карапсем тумала. Çапла вара, пирĕн паттăр соколсем—аслă Сталин питомецĕсем тытса пынипе хăвăрт вĕçекен самольотсем çĕршыв чăпне ӳстернĕ пекех, карапсем те унăн чăпне ӳстерччĕр. Тинĕс-çар ĕçне пирĕн совет çыннисем йуратакан ĕç тумала. Тинĕс-çар ĕçне ĕççыннисен анлă массисем пĕлсе тăракан тумала. Çак тĕлĕшре çӳлте асăннă брошӳрă пичетленсе тухнине ырлама. Вăл брошӳрăра çар карапĕ мĕнле пайсенчен тăнине, ун çинче мĕнле артиллери пулнине, вăл артиллери мĕнле снарйадсемпе пенине, карап тăшман снарйачĕсенчен тата минисенчен мĕнле сыхланнине, тăшман курасран пытанма мĕнле маскировкă тунине, тăшманпа вăл мĕнле çапăçнине интереслĕ тата ăнланмала каласа панă.

Çар-инженерлă ĕçĕсемпе сыхăву ытамĕсем çинчен çырнă тата икĕ брошӳрăра та питĕ пысăк усăллă сведенисем пур.

„Библиотекăна" ăнланмала чĕлхепе çырнă. Тĕрлĕрен ӳкерчĕксемпе, схемăсемпе тата чертежсемпе илемлетнĕ. Кашни брошӳрă уйрăммăн пĕр-пĕр çар çинчен ăнлантарса парат, пĕтĕм библиотекă вулакана кучченехи çар техникипе пуринпе те паллаштарат тата вĕсемпе вăрçăра мĕнле усă курмаллине каласа парат.

Библиотекăри çитменлĕхсенчен çакна палăртмала, автăрсем историлĕ примерсем сахал илсе кăтартнă тата Испанипе Китайри вăрçă опычĕсенчен нимĕнле пример те илсе кăтартман. Пирĕн бойецсен пĕтĕмĕшле паттăрлăхне тата уйрăмăн пограничниксен паттăрлăхне кăтартман.

Çав çитменлĕхсем пур пулин те библиотекăна ырласа йышăнмала. Ăна кашни рабочи тата кашни колхозник пысăк интереспе вуласа тухнă тата унран пысăк усăллă пĕлӳ илĕ. Çав брошӳрăсем кашни библиотекăра—хуларă та йалта та пулччĕр тесе сунмала.

Полковник В. Кондашов.

*) К. Й. Ворошилов. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тата Тинĕс Çар Флочĕ XX çул тулнăрне. Госполитиздат. 1938. Стр. 14.

Парти пурнăçĕ

Парторгсемпе заместителĕсен канашлăвĕ

ШĂХАСАН. Парти райкомĕ парторгсемпе вĕсен заместителĕсен канашлăвне ирттерчĕ. Канашлура партин пуçламĕш организацийĕсен пухăвĕсене йĕпле хатĕрлесе ирттересси çинчен калаçрĕç.

Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнайĕн кантурĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацин парторгĕ Мишуткин йулташ хăйсен организацинче пухусене йĕпле хатĕрлесе ирттерни çинчен каласа пачĕ.

— Пуху пуличчен пилĕк кун малтан епĕ организацири кашни коммунисăх пуху хăçан тата мĕнле ыйтусемпе пуласси çинчен пĕлтеретĕп. Пухăва хатĕрленсе мĕнле материалсем вуламаллине кăтартса паратăп. Çавăнпа пирĕн организацинчи коммунисĕсен активлăхĕ ӳ рĕ. Пухусене пурте йĕркеле хатĕрленсе пыраççĕ. Кашниех тухса калаçаççĕ,—тет вăл.

Райĕçтавком çумĕнчи пуçламĕш организацин парторгĕ Савельев йулташ та хăйсен организацинчи ĕç опычĕсемпе паллаштарчĕ. Унтан парти райкомĕн çекретарĕ Ашмарин йулташ тухса каларĕ. Çапла парторгсем канашлура пĕр-пĕрин опычĕпе паллашрĕç.

Йулашкинчен парторгсемпе вĕсен заместителĕсене Данилăв йулташ Н. Г. Чернышевскин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен доклад туса пачĕ.

ПСЧ(б)П райкомĕн çакнашкал канашлусене тăтăшах туса ирттерес пулать.

А. Никифăрăв.

Уйава хатĕрленеççĕ

ИШЛЕЙ. Ленинла комсомол 20 çул тултарнă уйава комсомол организацисем ĕçре пысăк çитĕнӳсем туниле кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

ПСÇЛКС райкомĕ Ленинла комсомол 20 çул тултарнă уйава хатĕрленнĕ май, июлĕн 21-мĕшĕнче комсоргсен тата комитет çекретарĕсен канашлуне туса ирттернĕ.

Ленинла комсомол 20 çул тултарнă уйава тивĕçлĕ парнесем хатĕрлессипе „Автогигант", „Хĕрлĕ очча", Буденный йачĕпе тăракан колхозри комсомол организацисем лайăх хатĕрленеççĕ.

„Автогигант" колхоз çумĕнчи комсомол организацинче ПСÇЛКС Тĕпкомĕ Ленинла комсомол 20 çул тултарнă уйава хатĕрленесси çинчен йышăннă постановленине тĕплĕн сӳтсе-йавнă хыççăн, Аннă Терентйĕвă, Николай Горбунов комсомолецсем кирпĕч каларас плана 140—150 процентшăр тултарса ĕçлеççĕ. Политзаняатисем те йĕркелĕ пулса пыраççĕ. Политзаняатине, комсомолецсемсĕр пуçне, комсомола тăман çамрăксем те çӳреççĕ. Политзаняатисем йĕркелĕ пулса пынипе çамрăксем комсомола кĕресси те ӳсет. Кăçал 17 çамрăка комсомола илнĕ.

Мамашри Буденный йачĕпе тăракан колхозри комсомол комитечĕ Ленинла комсомол 20 çул тултарнă уйава уйхиртен тырпула пĕр такаксăр, вăхăтра пуçтарса кĕнипе кĕтсе илет. Колхоз председателĕ Василий Гусков комсомолец уйхир ĕçне туса пыма ĕç планне тунă. Пур ĕçе те планпа туса пынипе, кĕрхи тырăсене 6 кун хушшинче пысăк пахалăхпа пуçтарса кĕнĕ. Халĕ кĕрхи тырăсене уйхиртен турттарса капана хывнă. Çуртрисене вырас ĕç хĕрӳлĕн пырать. Кĕрхи тырăсене государствăна парса татнă. Уйхиртен тырпулсене пуçтарса кĕрес ĕçре комсомолецсем пĕр-перинпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Районра çакăн пек лайăх примерсене нумай курма пулать. Анчах комсомолăн хăшпĕр организацисенче лайăх ĕçлекенсен опычĕсемпе усă курма тăрăшмаççĕ. Уйрăмăнах „Красноармеец", „Правда", Тельман йачĕпе тăракан колхозсенчи комсомол организацисем начар ĕçлеççĕ.

Гер. Шчербаков.

Тимлĕн ĕçлени кирлĕ

Трак районĕнчи МТС организацилленнĕренпе виçĕ çул иртрĕ. Çак виçĕ çул хушшинче комбайнсемпе тата тракторсемпе ĕçлекенсем, йалхуçалăх ĕçĕнчи специалиссемпе йертсе пыракан работниксем ӳссе çитĕнчĕç.

МТС-ра ĕçлекенсен йышĕ 254 çынна çитрĕ. Вĕсенчен комсомолецсем 68 çын, парти членĕсемпе кандидатсем 4 çын. Партире тăман большевиксем—стахановецсемпе ударниксем те сахал мар. Кунта ĕçлекенсем умне районри колхозниксем пысăк ыйтусем кăларса тăратаççĕ. Кĕскен каласан, МТС колхоз производствине организацилесе пыракан пысăкран та пысăк вăй пулса тăчĕ.

МТС-ри пуçламĕш парторганизацинчи коммуниссем ĕçе йертсе пыракан паха та хăйулă руководителĕсем пулмала. Анчах вĕсем çакна кирлĕ пек ăнланса илсе, çителĕклĕ таран ĕçлемен. Трактăриссемпе комбайнерсем хушшинче стахановецсемпе ударниксем пур, вĕсене парти ретне кĕме пулăшмала. Анчах иртнĕ виçĕ çул хушшинче парти ретне пĕр çынна та илмен, сочувствуйушчисемпе ĕçлесси çинчен манса кайнă.

МТС-ра комсомолецсем ĕçлеççĕ, вĕсен хушшинче парти ретне кĕме тивĕçлисем нумай. Акă, Григорйевă Йекатеринă пĕр çул трактăрискăра ĕçленĕ, 1937 çулхи пуçласа пайанхи кунччен комбайнерка пулса ĕçлет. Петров Митрофан виçĕ çул хушши ĕнтĕ трактăрис пулса, примĕрлă, лайăх ĕçлесе пырать. Халĕ Григорйевăпа Петров йулташсем парти ретне илме заявлени панă, анчах вĕсен заявленине пăхса тухасси вăрăма тăсăлса пычĕ.

Парти ретне илме ыйтса заявлени паракансем татах та пур, вĕсене пулăшмала, вĕрентсе çитĕнтермеле. Халĕ Степанăв комбайнер, Ананйĕв шофер тата Осипăвпа Павлăв бригадирсем партине кĕме хатĕрленеççĕ. Вĕсем пурте ĕçе лайăх туса пыраççĕ, дисциплинăлă çынсем.

Парторганизаци ĕçне çĕветсе çырĕпле тсе йăма пур условисем те çителĕклĕ. Производствăра ĕçлекенсемпе тачăн çыхăнса, тăрăшса ĕçлени çеç кирлĕ.

МТС çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци парти ретне çĕнĕрен илнĕ йулташсене тата сочувствуйушчисене большевикла воспитани парса çитĕнтерсе пырассă, пур йенчен те шанчăклă тата примерлĕ çынсене парти ретне кĕме пулăшасса шанатпăр.

Заканский.

Ăмартăва хутшăнатпăр

ШĂХАСАН. Епĕр, Йамашри „Ударник" колхоз çумĕнчи организацири комсомолецсем, Сталин йачĕпе тăракан автосавăтри стахановецсем чĕнсе каланине пысăк хавасланхпа сӳтсе-йаврăмăр. Пирĕн организацинчи кашни комсомолец Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă чаплă уйав тĕлне тăван çĕршыва хаклă парне пама хатĕрленес тĕлĕшпе татăклă обйазательствăсем илчĕç.

Туллимар вăтам шкулта вĕрентекен И. А. Шашков 1938—39 çулхи вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илме, вĕренекенсенчен ПВХО значокĕн нормисене пама 25 ачана, БГТО значокĕн нормине пама 20 ачана хатĕрлентерме обйазательства илчĕ.

Колхоз счетоводĕ Т. Соколов колхозри учот ĕçне лайăх туса пыма йалти çамрăксем хушшинче массăлă воспитани ĕçне вăйлăн туса пыма пулчĕ.

Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă уйава çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленес тĕлĕшпе хамăрпа ăмăртса ĕçлеме Çĕнĕ Сĕрйелĕнчи „Оборонă" колхозри комсомол организацине ăмăртăва чĕнтĕмĕр.

Комсомол комитечĕн çекретарĕ Ал. Иванов.

Ирхи куплетсем

Урампа епĕр пыратпăр
Йура-кулă çĕклесе.
Уйала ĕçе васкатпăр
Маттур йĕкĕтсем, хĕрсем.

Ак çитсе-иртсе пыратпăр
Асла клубăн çумĕпе.
Чӳречесем йалтăраççĕ
Тин çĕç тухнă хĕвелпе.

Ку—чиркӳччĕ. Тăйлăк-тайлăк
Иртсе кайнă кунсенче.
Аçа çапнă йăвас майлă
Хĕрес пурччĕ тăрринче.

Кунта ĕлĕк мĕскĕн халăх
Туртан ыйтнă пулăшу.
Тархасланă, парне панă:
Пӳремеч те пашалу,

Ӳкĕнсе, йĕрсе кĕлтунă,
Çӳлтен кĕтнĕ кирлине.
Чĕркуççи çинче чуптунă
Мăнтар пупăн аллине.

Ирсĕр пупĕ „вĕрентетчĕ",
Хăрататчĕ тамăкпа.
Хай çĕлен пек йун ĕметчĕ,
Çарататчĕ халаха.

Халĕ ак телейлĕ халăх
Çутта тухрĕ тĕттĕмрен.
Тĕн ултавĕ çĕрсе кайрĕ,
Асап сӳнчĕ ĕмере.

Çук халь тамăк, çук турри те,
Семсĕр пуп та кирлĕ мар.
Çамрăк-ватă, уйаври пек,
Ирсерен ĕçе утать.

Утнă май çитсе тăратпăр
„Вылях мурĕ" çырмине.
(Авалтан çапла йат панă,
Ахăр пана кирлине).

Кунта ĕлĕк кĕпер çукчĕ.
Çырми—тарăн, сакăлта.
Вылях-чĕрлĕх кашни çулăн
Мĕнчул пĕтнĕ çакăнта.

Астăватăп, еп айванччĕ:
Çытмапаччĕ, çаруран.
Кĕрхи каç. Йĕпе-сапаччĕ.
Каç сĕм тĕттĕм, хуп хура.

Унчух епĕр аттепе-ха;
Çап тийене лав çине.
Йерипен анса пыратпăр
„Вылях мурĕ" çырмине.

Çулĕ-йапăх, çырма тарăн,—
Лаша ӳкрĕ месерле.
Кайса ӳкрĕ те тăмарĕ,
Кӳçне хупрĕ шеремет.

Çук, атте те чăтаймарĕ,
Каçсă йанă йăвăç пек
Пăрăнче анчĕ те, ахлатрĕ,
Йĕрсе йачĕ ача пек.

Çак çырма та халь çĕнелнĕ:
Çыранне те сĕвеклетнĕ—
Урла хывнă çĕн кĕпер.
Сăвăйсем йуман, тĕреклĕ—
Чĕнтĕрлене чип чипер.

Çыравра: сапать çеç çулăм
Тимĕрç лаçе—хура лаç.
Унта тимĕр, унта хурçă,
Хĕрелеç те хуралаç.

Кĕпер урла каçнă майăн
Хирес пултăм аттене:
„Сокола" тытса утлавнă,—
Шăварма анатăп,—тет.

Шур сухал ку, утмăл урлă
Каçса ирнĕ пĕлтерех.
Ну, çапах та пултарулăн
Ăмăртать вăл пиренпе.

Ĕлĕк вăл нумай ĕçленĕ,
Минкеленнĕ, вылях пек.
Анчах пур-пĕр кĕлмĕçленнĕ,
Йемсĕр, выçă пур пĕрех.

Акă халĕ, пăхăр-курăр,
Шутламасть вăл ватăлма:
Çиййĕнче сăран тушуркă,
Пĕç-кăк таран атăпа.

Ав, лерен, хăвалăх урла
Вĕççе каçрĕ йан-та йан—
Хĕр сасси, йанравлă йурă,
Сĕтлĕ çулă фермăран:

„Еп йуратнă шурă ландăш
Чечек çурнă, куртăр-и.
Еп йуратнă каччă тантăш
Комсомолец, тракторист".

Кунта фермă, лере—улăх,
Кетӳ тухрĕ улăха.
Хăмăр-хĕрлĕ вăкăр „Улăп"
Кетӳ умен улăхать.

Урампа епĕр пыратпăр
Йура-кулă çĕклесе.
Уйала, ĕçе васкатпăр
Маттур йĕкĕтсем, хĕрсем.

Т. Иванов-Таçук.

Канаш р-нĕ.

Тăрăшса ĕçлет

Йамбахтин йалĕнче (Вăрнар р.) Н. Ананйĕв трахработник ĕçлеме пуçличчен трахомлисем пĕтĕмпе 95 çын пулнă. Ананйĕв йулташ тăрăшса ĕçленипе 6 уйăх хушшинче 47 çынна трахомран сыватрĕ, халь вăл ыттисене сыватассишĕн тăрăшать.

П. Йегорăвă, М. Йегорăвă, М. Христофорăвă тата О. Петровă трахомран сывалассишĕн тăрăшаççĕ. Вĕсем трахпункта кун сиктермесĕр çӳреççĕ.

Колхозниксем тĕрлĕрен суransемпе трахпункта пырсан, Ананйĕв вĕсене çийĕнчех васкавлăн пулăшу парать.

Хальхи вăхăтра Ананйĕв йулташ колхозниксем ĕçленĕ çере уйа тухса çӳрет.

Г. Левин.

26 çул фельдшĕрта

— Медицинă ĕçне йурататăп. Ĕçхалăхне çирĕп сывлăхла тăвассишĕн тăрăшса ĕçлетĕп, тет Мильукин йулташ.

Игнати Петрович Мильукин йулташ медицина ĕçĕнче 26 çул хушши пĕр таталма ăр ĕçлет. Хальхи вăхăтра вăл Турхан районĕнчи Липăвкăри сăружкă савăт çумĕнчи медпунктăн фельдшĕрĕ. Мильукин йулташ хăйĕн ĕçне аван туса пырать. Вăл тăрăшнипе çак кунсенче 15 рабочи ГСО нормине парса значоксем илчĕç.

Ив. Архипăв.

Комсомол йубилейĕ йачĕпе спартакиадă

Ленинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа Чăваш чăнтă союзĕ „Спартак" обществипе пĕрле, спортăн çуллахи вăййисем тăрăх, спартакиадă ирттерме палăртнă. Спартакиадă Шупашкарта, çентйабĕрĕн 6-мĕшĕнче пулать. Спартакиадăна пурĕ 300 çынна йахăн хутшăнмала.

Хальхи вăхăтра вырăнсенче çак спартакиадăна хутшăнас шутпа ăмăртусем пыраççĕ.

Ленинградри Хĕрлĕ йалавлă артиллери училишчи

Ленин хулинчи тĕп магистральсенчен пĕринче — международнăй проспектра ĕлĕкхи пысăк çурт ларать. Çурт умĕнче Турци вăрçинче пулнă бронзăран тунă икĕ тупă тăрать.

Çак вăл Ленинградри Октйабĕр йачĕпе тăракан Хĕрлĕ йалавлă 1-мĕш артиллери училишчи. Вăл Совет Союзĕнчи лайăх училищăсенчен пĕри шутланать. Училищăна çамрăк совет çĕршывĕ çине интервентсем тапăннă вăхăтра, Хĕрлĕ Çар организациленĕ вăхăтра уçнă. 20 çул хушшинче училищă тăван çĕршыва паранăса ĕçлекен пысăк квалификацилĕ артиллери командирĕсене пиншĕрĕн вĕрентсе кăларчĕ. Халĕ вĕсенчен нумайăшĕ Рабочисемпе Хресченсен чаплă Хĕрлĕ Çарĕнче пысăк вырăнсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче—Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Артиллери начальникĕ виçĕ орденлă комкор Воронăв йулташ.

Вĕренӳ çулĕ çывхарса килет. Училищă тăван çĕршыври çамрăк патриотсене вĕренме илме хатĕрленсе çитрĕ. Совет Союзĕнчи пур кĕтессенчен те—Владивостокран, Псковран, Игаркăран, Крымран, Мускавран, Батумран, Алма-Атăран, Вологдăран тата ытти вырăнсенчен те вĕренме кунта килеççĕ. Кăçал çеç вăтам шкултан вĕренсе тухнă çамрăксем малашне Ленинградри Хĕрлĕ йалавлă артиллери училищинче вĕренме кăмăл тăваççĕ.

Училищă патне пырса çитсен çурт çумĕнче икĕ илемлĕ витринă тăнине куратăн. Вĕсем çинче курсантсен пурнăçĕпе вĕренĕвĕ тата вĕренме илмелли йĕркесем çинчен кăтартса панă. Вестибюле кĕретĕн. Мрамăртан тунă анлă картлашкасем çийĕпе пырса, вĕренмелли пӳлĕмсемпе пурăнмалли пӳлĕмсене пырса тухатăн. Ку пӳлĕмсенче телейлĕ çĕршывăн çамрăкĕсем пулаççĕ.

Классемпе лабораторисем, вĕрену вырăнĕсем, полигонсемпе манежсем хăйсен илемлĕхĕпе тата тасалăхĕпе куçа илĕртсе тăраççĕ.

Артиллери командирĕн нумай пĕлмеле. Унăн вăтам тата аслă шкул программи чухлĕ математикăна, теорилĕ механикăна, топографине, химине, çар ĕç техникине, радиопа телефон ĕçне, пĕр-пĕр йут чĕлхене тата ытти наукăсене те пĕлмеле.

Оборонă Халăх Комиссарĕ—Совет Союзĕн Маршалĕ Ворошилав йулташ: „Артиллерис пулассин, уйрăмăнах артиллери командирĕ пулассин вăл пур йенчен те пултарулă çын пулассин".—терĕ. Ленинградри Хĕрлĕ йалавлă 1-мĕш артиллери училишчи пур йенчен те пултарулă çынсене хатĕрлет. Пур йенпе те пултарулă çын пулас тесен нумай вулани кирлĕ. Училищăн пысăк библиотекă, унта 50 000 том кĕнеке пур. Культурăлă канма тата вăхăта савăнăçлă ирттерме питĕ паха клуб пур, унта тĕрлĕ кружоксем ĕçлеççĕ.

Училищă çинчен кĕске статйара пĕтĕмпех çырса пĕлтерме çук. Артиллери служпинче пулма кăмăл тунă çамрăксем çентйаберĕн 1-мĕшĕнчен кунта килеççĕ. Совет çĕршывĕнчи çамрăк патриотсем Совет Союзĕнчи халăхсен ырă пурнăçне сыхлама пулса, командир пулма вĕренеççĕ.

Училищăн воспитанникĕ—аслă лейтенант ТЕПИН.

Днепропетровщинăри парторганизаци йухăмĕ

Суйлав кампани вăхăтĕнче Днепропетровщинăра партире тăман çĕнĕ, нумай пиллĕ актив ӳссе çитĕннĕ, вăл парти ретне тултарса пымалли пуйан резерв пулса тăрать. Пирĕн тăван çĕршыври чи лайăх çынсем парти речĕсене туртăнасси татти сыпписĕр вăйланса пырать.

6 уйăх хушшинче кăна Сталински чукунçул парторганизацийĕ кандидата 704 çын илнĕ тата 414 çынна кандидатран парти членне куçарнă (пĕлтĕрхи çул çав чукунçул çинче парти членне тата кандидата пурĕ те 213 çын çеç илнĕ пулнă).

„Правда" йачĕпе тăракан вакунсем тăвакан савăт парторганизацийĕ йулашки çур çул хушшинче партине 78 çын илнĕ, вĕсенчен 50 комсомолец.

(ТАСС).

Панариций

Панариций тесе пӳрне шыççа пӳрленсе тăнине калаççĕ. Хапрăк-савăтсенче йе йалхуçалăх ĕçĕнче ĕçлекенсем çав чирпе сахал мар чирлеççĕ. Йалхуçалăхĕнче ĕçлекенсем уй-хирти ĕç вăхăтĕнче ытларах чирлеççĕ.

Панариций вăл ĕççыннисемшĕн сийенлĕ чир, ун пирки темĕн чухлĕ вăхăт ĕçрен татăлса асапланаççĕ, хăшĕ тата ĕçлейми пулса йулаççĕ.

Ĕç вăхăтĕнче алăсем, пӳрнесем çинчи ӳте тĕрлĕрен майпа тĕрлĕ аманусем—шăрпăк кĕрсе, йе касни-çапнипе, типсе çурăлнипе суранланма пултараççĕ. Тепĕр чухне çавăн пек аманусем пăхăрмасăр, сисмесĕр пулса пыма пултараççĕ. Ӳт çинчи пĕчĕк кăна амаиă вырăна суран тăвакан микробсем пырса лексен çав вырăнти ӳт ăшне микробсем шаларах сăрăхса кĕрсе ĕрчеме пуçлаççĕ. Вара вăл вырăн хĕрелсе, шыçăнма, унтан пӳрленме пуçлать. Унтан сывăраймин пулать, йăвăрланса чирле пуçлать.

Ĕçлекен çынăн пӳрне çинчи сийеатн ӳт хулăм, çирĕп. Çавăнпа ыратакан вырăнти пӳр хулăм ӳт-тир витĕр тулалла тухаймасть, пӳрне вылянипе шал йенелле сарăлса кайать. Тепĕр чухне пӳрне шăмми çине лексе шăмăна çĕртме пуçлать. Тата пӳрне шăнăрĕсем хушшипе алă тупанне, тепĕр пӳрнесем çине йе хул çине те сарăлса кайма пултарать. Вара пĕтĕм алă йе хул шыçать.

Панариций чирĕ пуласран çаксене астуса пымала: уйхир ĕçĕ тата ытти вăхăтсенче те алăсене йалан супăньпа çуса, таса тытмала. Ку йĕркене тытса пыма кашни килтех умывальник тата супăнь пулмала. Пӳрнесем çинче тĕрлĕ тасамарлăхсем тытăнса пырасран чĕрнесене вăхăтра касса пымала.

Алăсене çапла таса тытса пырсан, пирĕн алăсем çинче амаиă ӳте лексе пӳрлентерсе чирлеттерекен микробсем сахал пулаççĕ, вара панариций чирĕнчен тата ытти чирсенчен те сыхланма пулать. Ĕçленĕ вăхăтра алри ӳт типсе çурăласран каçхине алăсене ăшă шывпа, супăньпе çуса тасатнă хыççăн, алшăллипе шăлса типĕтнĕ ӳте çемĕçтерекен маçпа-тăшепиппа сĕрсе пымала. Алăсем çинчи пĕчĕк сурансене те микробсем пырса лексрен иодăпа йе спиртпа сĕрсе таса марлĕпе çыхса тытмипа. Сурана çыхнă чухне малтан марлĕ хумала, унтан тин ватка хурса çыхмала. Суран çине хумалли марлĕ питех те таса пулмала, унăн суран çине хумалли йенне алăпа тĕкĕнме те йурамасть.

Çавăнпа кашни колхозрах, бригадăрах ĕçленĕ çĕре илсе çӳреме пĕчĕк аптечкăсем пулмала. Сурана вăхăтра-сыхни—ӳте пӳрленсе чирлĕсрен сыхлама пултарать.

Панариций пулнă çынăн мĕнле сипленмеле? Пӳрне шыçа пуçласанах суран çине малтанах сивĕ йапала тытмала, таса тутăр татăкне сивĕ шывпа йĕпетсе, улăштарса хурса тăмала. Чирлĕ алла ĕçлемесĕр канлĕх памала. Савăх та шыççăнни иртмесĕр вăйланса пырать пулсан, ăшăтса тăракан компрес (вĕретсе сивĕтнĕ шывпа йĕпетнĕ марлĕне) ыратакан пӳрне çине хумала. Ун çине нӳрĕ тата ăшă тытса тăма клейонкă çине ватка хурса, ăçăнне ансăнç кут улăштарса çыхмала. Шыççăнни кун хыççăн та чакмасан, вара кастармалла тивет: унсăрăн чир шалалла сарăлса татах та вăйланма пултарать. Пӳрне çинчи суран хытă ыратать. Çавăнпа та хăшпĕр пурне шыçнă çынсем, ыратнинчен хăраса, пульницăна пырса кастармасăр тăнине, панариций чирĕпе нумай вăхăт хушши асапланаççĕ. Ыратнинчен хăрама кирлĕ мар. Врачсем ыратнине сисĕтмен тăвакан емелпе укол туса касаççĕ.

Врач Е. МАКАРАВ.

Лайăх пуçару

Августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа комсомол Чăваш Обкомĕн „Пионер сасси" хаçат редакцийĕ вырăсла страницă кăларма пуçланă.

Вырăсла страницă чăваш ачисемпе пионерсене вырăсла вулама-çырма хăнăхтарас тата пирĕн республикăра пурăнакан вырăс ачисемпе пионерсене хаçат ĕçне явăçтарас шутпа тухать.

Ку хаçатчен маларах вăл страницă тухнă ĕнтĕ. Вĕсенче хаçат Ленинла комсомол 20 çул тултарнине мĕнле хатĕрленни, августсенче мĕнле пурăнни çинчен тата ытти пионерсен çырăвĕсене тата вырăсла сăвăсем пичетленĕ.

Вырăсла страницă уйăхра икĕ хут тухмалла.

Танк командирĕ

Виçĕ çул кайала вăл Пăравкав хирĕсем тăрăх кайала-малала хутласа çӳретчĕ. Савăнăçлă ĕç шавĕпе, йулташсен вăййа куллипе киленсе, кăçчен трактăр çинче ĕçлетчĕ. Ку виçĕ çул кайала. Ак халь ун умĕнче урăх хирсем, çарансем, вăрмансем. Анчах вĕсем, Пăравкав хирĕ пекех, хаклă, тăван. Ун аллинче урăх тĕрлĕ руль, анчах вăл трактăр рулĕ патне хăнăхнă пекех вĕренсе çитнĕ ку руля та.

Давыдăв, суйма илсе тухнă тавара çăвăнă пек пăхкаласа, çырма хĕррине çитсе чарăннă танк патĕнче савăнăçлăн кулкаласа тăрать.

— „Танкист", пĕр котелок шыв илсе килсе çăвран, тутлăн кăна ĕçсе йарам,—тет вăл хăйĕн ученикне, 15 çулхи ача пек çамрăк пит-куçлă Петăна.

Петăна вăл „танкист" тесе йулташла йĕкĕлтесе чĕнет. Пĕр уйăх ĕнтĕ Петă „танкист" йатне илтни.

Пĕр уйăх кайала ăна Давыдăв пĕррехмĕш хут руль тыттарнă пулнă, хăй унпа пĕрле ларса кайнă. Петă, руля пăркала-пăркала, танка вăрман хĕррине илсе çитерчĕ. Вăрмана кĕрсен вара вăл йăлтах аптăраса ӳкнĕ, нимĕнле те танка йывăççем хушшипе илсе пыма пултараймăн. Вăрмана пысăкăх та пулмас, Давыдăв кăларĕшле. Петă виçĕ йăвăç хушшинче атăшса кайнă. Анчах ăна уншăн Давыдăв вăрçман. Вăл хăй те виçĕ çул кайала танка Петăран лайăххăх илсе пыраймăн. Вăл, шыв ĕçсе, çырма хĕрне чĕркуçленсе ларчĕ. Чĕркуçленинĕ хушăра кăсйинчен тухса ӳкме тăнă кĕнекине йарса илсе, машин çине ывăтса йачĕ. Еп кĕнеке хуплашки çинче „М. Ю. Лермăнтăв" тесе çырнине çеç курса йултăм.

— Лермăнтăва вулатăр пулас, Иван Петрович?

— Вулани çук, кĕсйере чиксе çӳретĕп çеç,—тет вăл картус касăрукĕ çинчи тусана шăлса. Çавăнтах хушса хурать:

— Ăна лайăх çырать вăл, Лермăнтăв. Ун сăввисенче чĕрене тыткăна илекен темле хăват пур. Итлĕр-ха:

„Играют волны, ветер свищет,
И мачта гнется и скрипит...
Увы, он счастия не ищет
И не от счастия бежит"!

Унтан еп ун çăмахĕсенчен Иван Петровичăн кăçал вăтам шкул аттестатне пĕлетĕп. Кунăр пуçне вăл дивизири парти шкулĕнче вĕренет мĕн. Ытти пушă вăхăт унăн илемлĕ литературă вулама кайать. Хĕрлĕ çара кайнăренпе вăл вырăссен паллăрах классикĕсене пурне те вуласа тухнă.

— Пурнăç çав тĕрлĕ хăвăрт улшăнать, васкать пурнăç, хăваласа çитме çук,—тет вăл йаланах.—Пирĕн вăхăтра Хĕрлĕ Çар командирĕ 4 çул вĕреннипе йулма пултараймасть. Вĕренмеле.

Епĕр унтан хăйĕн кĕске биографине каласа пама ыйтрăмăр. Каласа пачĕ. Йаланхи пекех йулашкинчен куйта та пурнăçпа тан ĕлкĕрсе пыма кирли çинчен сăмах хушса хучĕ. Вара еп ăна ăнлантăм: Давыдăв канăçсăр етем иккен. Вăл хăйне чĕррĕ кĕрекенскер, хăйĕн çитменлĕхĕсене хăйех тупса критиклекенскер, пурнăçра пĕр чăрăнусăр малала туртăнаканскер иккен.

Биографийĕ унăн вăрăм мар: 1910-мĕш çулта çуралнă, йалти 1-мĕш сыпăклă шкул пĕтернĕ, икĕ çул кетӳ кĕтнĕ, икĕ çул трактăрис пулса ĕçленĕ. Хĕрлĕ Çара килсен, ĕмĕрлĕхех кунта пурăнма йулнă.

Вăл танк командирĕ пулнăранпа икĕ çул çеç иртрĕ-ха. Анчах çак икĕ çул хушшинче вăл машинăна илсе пырас ăсталăха лайăх вĕренсе çитнĕ. Вăл хăйĕн машинине пит те тĕплĕ пĕлет, ачаранах çак машина çинче ĕçлет тейĕн.

Акă Давыдăв машинă ăшне кĕрсе ларать. Руль пăрать те вăл, танкине пăтмасăр çырмалла кĕрсе кайать, ун йĕри тавра шывпа пылчăк çеç сирпĕнсе йулать. Тепĕр минутран танк, вăкăр пек мĕкĕрсе, çырма леш йенне çыран хĕрне тухать, унтан, тĕртнĕ тăла сарса тухнă пек икĕ хура йĕр хăварса, вăрманалла кĕрсе кайать. Ротă йал çывăхĕнчи лапама вырнаçнă. Тек малала кайма май çук: малтии ку йалта „кăваккисем" пуррипе çуккине пĕлес пулать. Йал „кăваккисен" аллинче тăрать пулсан, „тăшман" вăйне пĕлме ротă çитиччен „кăваккисемпе" çапăçăва кĕмеле.

Разведкă çур сухрăма малала кайнă çĕртен кайала килнĕ, вăл йалта „тăшман" вăйĕсем туххине курнă мĕн. Çывăхрах вĕсен пулемечĕсем хыттăн калаçма тытăннă.

Ротă командирĕ çапăçăва хатĕрленме хушнă. Часах Давыдăв танкĕпе „тăшмана" хирĕç кайнă.

Хăйуллăн тĕмесем хушшинчен кĕрсе вăл пулемет йăвисене пĕтерсе хунă. Танк хыççăн „тăшман" çине пулеметсенчен персе ротă çывхарнă. „Кăваккисем", нумай çар хатĕрĕ пăрахса хăварса, кайала чакнă.

Давыдăв çуллахи вĕренӳре кун пек тĕслĕхсем пĕрре кăна мар кăтартнă ĕнтĕ. Вăл пур çĕрте те хăйĕн ĕçне тĕплĕ пĕлнипе, умне лартнă задачăна вăхăтра, лайăх, тĕплĕ пурнăçланипе палăрса тăрать. Хăйĕн пĕлĕвĕпе опычĕпе йулташĕсене пама тăрăшать.

Пирĕн паттăр танкиссем, Давыдăв пек командирсем кирлĕ вăхăтра хăйсен танкĕсене тăшман çине хăйуллăн илсе кайĕç.

К. Çергейĕв.

Китайри вӑрҫа

Исвертри Китайра Йанцзы шывӗн икӗ хӗррипче те августӑн 5-мӗшӗнче кунӗпех ҫапӑҫусем пынӑ. Ку районра Йапони 6 дивизийӗ ҫапӑҫать. Китай ҫарӗсем йапонецсене питӗ хытӑ хирӗҫ тӑраҫҫӗ, вӗсене нысӑк ҫухатусем кӳреҫҫӗ. Пойанху кӳлинчен хӗвеланӑҫ йеннерех Йанцзы шывӗн кӑнтӑрти ҫыранӗнче августӑн 5-мӗшӗнче йапонецсен 400 ҫынтан кайа мар вилнӗ. Хукоупа Тынцзе хушшинчи шоссе ҫулне (Цзуцзйанран хӗвелтухӑҫнерех) Китай отрйачӗсем татнӑ. Хукоупа Цзуцзйан районӗнче йапонецсен тылӗнче партизансен отрйачӗсем пырса тухнӑ. Йанцзы шывӗн ҫурҫӗри ҫыранӗнче, Хуанмейаран хӗвеланӑҫнерех (Сусунран кӑнтӑр хӗвеланӑҫ йенче) Китай ҫарӗсен оборона линийӗсем пыраҫҫӗ. Йапонин тӗп вӑйӗсем Сусун тата Хуанмейа хушшинче ҫурма ҫул ҫинче тӑраҫҫӗ.

Ҫурҫӗрти Китайра Йапони ҫарӗсем, Китай ҫарӗсем тапӑннине тӳсеймесӗр, Шанҙси провинцин хӗвеланӑҫ йенчи Линши хулинчен кайала чакнӑ.

(ТАҪС).

Китай ҫарӗсен Йанцзы йуханшыв районӗнчи контрнаступленийӗ

Августӑн 6-мӗшӗнче Йанцзы йуханшывӗн ҫурҫӗр ҫыранӗ ҫинче йапонецсен темиҫе атакине ҫӗмӗрсе. Китай ҫарӗсем Сусун районӗнче контратакӑ пуҫланӑ, Йапони отрйачӗсене чылайах пысӑккан ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Унта йапонецсен вилнисем кӑна 4 пин ҫынна йахӑн шутланаҫҫӗ.

Августӑн 6-мӗшӗнче Йанцзы йуханшывӗн кӑнтӑр ҫыранӗ ҫинче Китай ҫарӗсем, Йапони колоннине ҫӗмӗрсе тӑкса, Шахе станци ҫывӑхӗнчи ҫӳлӗ вырӑна ҫуртса илнӗ. Йапонецсен унта 2 пин ҫынна йахӑн вилсе тата аманса пӗтнӗ.

Хуанмейран инҫех мар Йанцзы шывӗн ҫыран хӗррине купаланине ҫӗмӗрнипе капланса аннӑ шыв айне пулса Йапонин икӗ пин салтакӗ пӗтнӗ. Нумай вӑрҫа хатӗрӗсем пӗтнӗ.

Йулашки пӗлтерӳсем тӑрӑх, Йанцзын ҫурҫӗр йенчи ҫыранӗ ҫинче августӑн 8-мӗшӗнче Китай ҫарӗсем Цйанҙшанҙран пуҫласа Хуанмей патне (Цзуцзйанран ҫурҫӗр йеннерех) ҫити тӑсӑлса выртакан пӗтӗм фронт тӑрӑх талкӑшпех контрнаступлени пуҫланӑ. Йапони ҫарӗсем кайала чакса пыраҫҫӗ.

Августӑн 7-мӗшӗнче Китай авиацийӗ артиллерипе пӗрле Йапонин Йанцзы йуханшывӗ ҫинчи ҫар карапӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ (Цзуцзйанран хӗвеланӑҫ йеннерехри районра). Бомбӑсем тивнипе 7 карап стройран тухнӑ.

(ТАСС).

Германи вӑрҫа хатӗрленни

Англири „Нйус кроникл" хаҫат ҫапла пӗлтерет: Германи фашисӗсем ҫӗршывӑн хӗвеланӑҫ чикки патне, унта вӑрҫӑ ӗҫӗ валҙи укрепленисем тума 60 пин ҫын ытла хуса пынӑ.

Германири пур хапрӑксемпе савӑтсем те, фашисла влаҫсен приказӗ тӑрӑх, хӑйсен рабочийӗсенчен 10—15 процентне ӗҫрен кӑларса йама тивӗҫ, вӑл рабочисемпе Рейн шывӗн сылтӑм ҫыранӗ ҫинче вӑрҫӑ ӗҫне кирлӗ укрепленисем тунӑ ҫӗрте усӑ кураҫҫӗ. Германин ҫурҫӗр вӗҫӗнчен кӑнтӑр вӗҫне ҫитиччӗнех Гитлӗр бетонпа хурҫӑ стена тӑвать, тесе ҫырать малала хаҫат. Ҫӗнӗ вӑрҫӑ хатӗрлесе калама ҫук нумай средствӑ пӗтереҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах Германи халӑхӗн чи пысӑк пайӗ выҫӑ ларать.

Ҫар укрепленийӗсем тунӑ ҫӗрте 200 пин ҫын ытла кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлет.

(ТАСС).

Чехословакире фашисӑма хирӗҫле демонстрацисем

Августӑн 7-мӗшӗнче Чехословакири пысӑк пунктсенче чылайӗшӗнче каллех фашисӑма хирӗҫле массӑлӑ выступленисем пулса иртнӗ. Демонстрацисем республикӑна таткаласа ваклама парас марри ҫинчен, вӑл никама пӑхӑнса тӑмалла марри ҫинчен калакан лозунгсемпе пулса иртнӗ.

Лабем патӗнчи Усти хулинче (ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ Чехи) вӑйлӑ демонстраци пулса иртнӗ. Хулари тӗп плошчӗтре пулнӑ демонстрацине митингра 12 пин ҫын пулнӑ. Рапотице хулинчи (хӗвелтухӑҫ Чехи) демонстрацире 4 пин ҫын пулнӑ.

Кошицӑ хулинчи (Словаки) Соколҙски стадионра пулнӑ матингра Тучны министр тухса каланӑ. Вӑл ҫапла каланӑ: „Фашисла Германи вӑйпа усӑ курсах Чехословаки политикине тата тӗнчери лару-тӑрӑва улӑштарма пикенсен, епӗр алла хӗҫпӑшал тытса сыхланатпӑр. Республикӑшӑн хӑрушӑ самантра ҫар хыҫӗнче нумай политикӑлӑ партисем ҫине вакланнӑ халӑх мар, ун хыҫӗнче пӗрлӗхлӗ ирӗк-кӑмӑлпа пӗрлешнӗ, гранит пек ҫирӗп наци тӑрӗ. Вӑл наци хӑй сыхланма пӗлнине пӗр хут мар кӑтартса панӑ ӗнтӗ".

(ТАСС).

Иккӗмӗш Пилӗкҫуллӑх займӗн саккӑрӗмӗш тиражӗ

Августӑн 17-мӗшӗнче Свердловск хулинче Государствӑн Иккӗмӗш Пилӗкҫуллӑх (4-мӗш ҫулхи кӑларӑм) займӗн 8-мӗш тиражӗ пулать.

Тиражра 173.920 пин тенкӗлӗх 1.060 пин выигрыш пулать.

(ТАСС).

Авиаци кунне хатӗрленни

Ҫӗршыври аероклубсенче Авиаци кунне хӗрӳллӗн хатӗрленеҫҫӗ.

Гомӗлри аероклуб работникӗсем пилотсене отличнӑ хатӗрлессишӗн, машинӑсене пӗр кӑлтӑксӑр ӗҫлеттерессишӗн ӑмӑртаҫҫӗ.

Хулари Горький йачӗпе тӑракан парка самолҙот тата планӗр кӑларса лартаҫҫӗ. Парка пыракансене инструктӑрсем самолҙотпа планер мӗнле ӗҫлени ҫинчен каласа параҫҫӗ. Унтах тата совет авиацин ӗҫӗсене кӑтартса паракан фотовыставкӑ организациленҫҫӗ.

Калинин облаҫӗнчи предприйатисемпе колхозсенче совет авиацийӗпе унӑн чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсем ҫинчен каласусем иртереҫҫӗ.

Августӑн 18-мӗшӗнче парксемпе садсенче Авиаци кунӗ йачӗпе массӑлӑ гулҙанисем пулаҫҫӗ.

(ТАСС).

Стахановла йухӑм виҫӗ ҫул тултарас умӗн

ЧИСТАКОВО (Донбасс), августӑн 8-мӗш. Малта пыракан № 30—31 шахтӑ горнҙакӗсем стахановла йухӑм 3 ҫул тултарнине тивӗҫлӗн кӗтсе илме хатӗрленеҫҫӗ. Ҫӗркӑмрӑк кӑлармали 8 уйӑх планне срукченех тултарнӑ. Шахтӑ коллективӗ 8 уйӑхлӑх заданирен ирттерсе 2 пин тоннӑ ытла кӑмрӑк панӑ та ӗнте. Ҫӗр айӗнче ӗҫлекен шахтӗрсем хушшинче ҫӗркӑмрӑк маҫтӑрӗсем 75 ҫын.

№ 2 бис шахтӑри горнҙаксем хушшинче социалисӑмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарӑлса пырать. Августӑн 6-мӗшӗнче 20 горнҙак икшер норма тата унтан та ытларах тултарнӑ.

(ТАСС).

Китайри вӑрҫӑ

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧӖ: Кӗҫӗн командир пулма вӗренсе тухнӑ Китай хӗрӗсем фронта кайас умӗн.

(Сойузфото)

Хула тӑрӑх

Йуханшывсем пирки

Чебоксаркӑ, Кайбулкӑ. Вӗсем йуханшывсем ӗнтӗ. Пӗр ҫырмине—хӗвеланӑҫне кӑнтӑр йенчен, теприне—кӑнтӑрпа хӗвеланӑҫ йенчен кӗрсе Шупашкӑр витӗр йухса тӳхсан, вӗсене иккӗшне пӗрле Атӑл йышӑнса илет.

Чебоксаркӑ шывне ҫулленех пӗвелеҫҫӗ. Ҫапах вӑл шывпа никам та усӑ курмасть, усӑ та памасть вӑл. Шывӗ таса мар, пӗтӗм таврана шӑршӑ сарать. Хулари пур тасамарлӑх тенӗ пек Чебоксаркӑ шывӗпе пухӑнса анать.

Тепӗр пӗви—Кайбулкӑ ҫырми пуҫӗнче, Чапайӗвски поҫолӑкне каҫса кайнӑ ҫӗрте. Йаланах йухӑнса выртать. Кӑҫал ӑна нумайах пулмасть пӗвелерӗҫ, татса та карӗ. Укҫа шыва кайнӑ пекех пулчӗ ку. Ытахалҙтен пӗр вӑхӑтра поҫолӑк ачисем шыва кӗркелесе йулчӗҫ. Хӑшӗсем тата унта кӗпесем ҫуса йулма та ӗлкӗрчӗҫ. Халӗ ӗнтӗ шыв нимӗн тумалӑх та йулмарӗ.

Ҫак пӗвесем йухӑнса выртнине хула совечӗ курмасть те пулӗ тетпӗр. Шел вара, тухса курмасть пулсан.

Тен вӗсем, хула советӗнче ӗҫлекенсем, вӗсем ҫинчен такҫанах пӗлеҫҫӗ пулӗ те, ҫапах поҫолӑка типӗре усраҫҫӗ-ха. Кунти шыв килти вылҙӑх-чӗрлӗхе шӑварма та кирлӗ. Пӳрт-ҫурт ҫума та унтан шыв йатмала пулать. Вӑл шыв Чебоксаркӑ шывӗнчен тасарах та тата пахарах. Халех пӗве кирлӗ пулать.

ИВ. МОСҪЕЙӖВ.

„Чӑваш орфографийӗ пирнийех" йатлӑ статйа пирки

Кирек йепле пысӑк ыйтӑва сӳтсе йавнӑ чухне те ПРИНЦИПЛӐХ чи кирли пулса тӑрать. Ҫак йенчен илсен, орфографи ҫинчен сӳтсе йавнӑ ҫӗрти принциплӑ чи пысӑк ыйту—вӑл чӑваш ҫырулӑхе вырӑсла алфавит ҫине куҫарасси пулать.

Вӑл пысӑк ыйтӑва кулҙтурӑ институчӗ тӑратнӑ пройект татса памасть. Вырӑс чӗлхинчен кӗнӗ сӑмахсене вырӑсла ҫырни вӑл чӑваш алфавитне вырӑс чӗлхипе ҫывхартни пулмасть-ха. Умра тӑракан ыйтӑвӑ чӑваш сӑмахӗсене ҫырассине те вырӑсла алфавит ҫине куҫарни ҫеҫ татса пама пултарать. Ҫакна кулҙтурӑ институчӗн директӑрӗ И. Йакӑвлӗв халиччченех ӑнланса илеймен иккен. Унтан та ытларах, ҫак ыйту чӗлхе тӗлӗшӗнчен институтӑн тӗп задачи пулса тӑракан ыйту. И. Йакӑвлӗвшӗн кӗтмен „хӑна" пулни курӑнать. Вӗсене „халлӗхе чӑваш алфавичӗпе орфографинче тӗпренех реформӑ тума никам та хушман". Ҫавӑнпа вӗсем „пайанлӑха" кӑна пройект хатӗрленӗ. Ыранхи ҫинчен ыран шухӑшлама лекет (Нумайранпа ӗнтӗ институт „ырансемпе" тӑрантарать) (ҫитес ҫулсенче пурпӗрех вырӑсла алфавит ҫине куҫас ыйту тухса тӑрать) институт питех те вӑйсӑррине ҫеҫ кӑтартать пулмала.

Анчах халӑх ун пек вӑйсӑр мар. Тӗрӗссиперех илсен, кивӗ алфавитпа кивӗ орфографи чӗлхене вӗренессине йӑвӑрлатас майпа тунӑскерсем пулнӑ. Вӗсем вырӑс чӗлхине вӗренессине йӑвӑрлатса тӑнӑ. кайала туртнӑ. Ҫавӑнпа вӗсене вӗренесси „тӗпрен реформа" тунине вӗренессиичен чылай йӑвӑртарах пулнӑ. Ахалҙтен мар ӗнтӗ, вырӑсла кӑшт та пулин пӗлекен чӑвашсем. йе вырӑс чӗлхине вӗренме тытӑнакансем тӑван чӗлхепе ҫыру ҫырнӑ чухне хӑйсем асӑрхаймасӑрах „Эбӗ" тесе ҫырса хураҫҫӗ. ь саспалине кӗртсе лартаҫҫӗ, йе „Яку" тесе ҫыраҫҫӗ, акцентсене лартса хӑвармасӑрах иртсе кайаҫҫӗ. Пӗтӗмпех чӑвашла тата таса ҫыракансем институтра та нумайах мар пулӗ вӗсем. Ҫакна шута илсен. И. Йакӑвлӗв пурнӑҫа кайала туртать, чӑмласа парассине кӗтсе ларать, ыйту ҫине ытла та „йӑвӑррӑн" пӑхать, тесе шутламала.

И. Йакӑвлӗв хӑйӗн пройектне темиҫе хут пӑхса тухса та „йут" тесе ҫырнӑ сӑмаха шыраса тупайман. Ун пек „вырӑн ҫукске", тесе ӳкӗтлет. Ӑнланса илме йӑвӑрах мар пек туйӑнать: интернационалла сӑмахсене пӗр пек ҫырни, тӗп чӑваш сӑмахӗсене тепӗр майла ҫырни—вӑл ӗнтӗ „скорлупа" текеннине сыхласа хӑварма пӑхни патнеле пырать пулмала. Ҫавӑнта шырамалла та ӗнтӗ „йут" сӑмаха.

Мӗншӗн вырӑсла алфавит ҫине куҫма ҫук пулать-ха вара? И. Йакӑвлӗв акӑ мӗн калать: „В. Йакӑвлӗв каланӑ пек ҫырма пуҫласан, орфографи пройектне ҫыракансемпе учителсенчен пуҫласа, пӗтӗм чӑваш халӑхне ҫӗнрен вулама, ҫырма вӗрентме лартас пулать ҫке".

Кулҙтурӑ институчӗ вырӑсла алфавита та вӗренсе ҫитеймен иккен! Унӑн умӗнче вырӑсла алфавита вӗренме ларас „хӑрушлӑх" тӑрать мӗн.

Крым тутарӗсене вырӑсла алфавит ҫине куҫма вунӑ хут йӑвӑртарах пулнӑ. Мӗншӗн тесен, вӗсен халиччен латинла алфавит пулнӑ, вырӑсла саспаллисем пӗррех те пулман. Пирӗн халҙхи алфавитра 7 саспаллине кӑна улӑштармалла, ыттисем пӗтӗмӗшпех вырӑсла алфавитра пур. Вӗсенчен хӑшне-пӗрне кӑларса пӑрахас пирки И. Йакӑвлӗв хӑйех сӗнӳ панӑччӗ пулас. Кулҙтурӑ институчӗ ҫак 7 саспаллине улӑштарма пултарайманни, институт „пайанлӑх" пройектсем туса хатӗрлени кирлӗ-кирлӗ мар ҫӗртенех „иероглифсем" кӗртсе тултарать. Дагестанра мӗнле халӑхсем пурри ҫинчен вӗрентме васкать, анчах унти пур халӑхсем те, Сойузра 29 чӗлхе ҫӗнӗ алфавит ҫине куҫнине айакка тӑратса хӑварать, хӑй аслӑ философ пулнине кӑтартма васкать. „Автӑр примерсем ианни вулаканшӑн пӗртте витӗмлӗ мар...", тет. Витӗмлӗ пултӑр тесе. И. Йакӑвлӗв йулташа лутарсен тата ытти нумай нацисен алфавичӗпе паллашма, хаҫатсем час-часрах вулама ӗнетпӗр.

В. ЙАКАВЛЕВ.

Чӑваш орфографи правилисен пройектне сӳтсе-йавнӑ май

„Малтанхи икерчӗ" ҫинчен

[illegible]

КАЛҌ, ДИАГОНАЛҌ, КОРОЛҌ, БЕМОЛҌ сӑмахсене валеҫесси йенӗпе анраса тӑтӑм. ГОРИЗОНТАЛЬНАЙ тесе йе горизонтальный тесе ҫырнипе ку формӑран хӑтӑлма май та пур пек. анчах КОРОЛҌ, БЕМОЛҌ сӑмахсене ун пек урӑхла формӑна куҫарма ҫук-ха: правилӑра кӑтартнӑ тӑрӑх королсем, бемолсем, дирижаблсем тесе те [illegible] роль—королӗ, ҫавӑн бемолӗйу (бемолю, бемолҙйу, бемолӳ), дирижаблйу (дирижаблӳ, май дирижаблӗсем, унӑн дирижаблйе) тесе ҫырма май килмест.

„Притяжательная форма" текенсене ҫырура пачах пӑрахса, кам та пулин. йаланах малтанхи формӑсемпе ҫеҫ ҫырмалла йӗрке шутласа кӑларсассӑн, ҫырма тем [illegible]

[illegible]

Пӗлтерни

Пайан, августӑн 10-мӗшӗнче, каҫхине 7 сехетре хула совечӗн суртӗнче Шупашкар хулинчи финанс тата сутуҫӑ организацисенче ӗҫлекен комсомолецсен тата сойузра тамам ҫамрӑксен канашлӑвӗ пулать.

Финанспа сутуҫӑ ӗҫӗнче ӗҫлекенсене, бухгалтӗрсене, государства дохочӗ тӑрӑх ӗҫлекен общӗствӑ инспектӑрӗсене тата финанс контролҙ постисене канашлӑва пыма чӗнеҫҫӗ.

ПСҪЛКС хула комитечӗ.

Чӑваш АСС Республикӗнчи Ҫар комиссариачӗн ПРИКАЗӖ

1938 ҫулти августӑн 1-мӗш, № 70. Шупашкар хули.

1917 тата 1918 ҫулсенче ҫуралнӑ граждӑнсене Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫар ретне илмели черетлӗ призыв ҫинчен

§ 1. ОБЙАЗАТЕЛНАЙ ҪАР СЛУЖБИ ҪИНЧЕН КАЛАРНА САККУНАН 131-МӖШ СТАТЙИ ТӐРӐХ 1917 ҪУЛТА ТАТА 1918 ҪУЛӐН ПИРВАЙХИ ҪУРҪУЛЕНЧЕ ҪУРАЛНА ГРАЖДАНСЕНЕ ДЕЙСТВИТЕЛНАЙ ҪАР СЛУЖБИНЕ ИЛМЕЛИ ЧЕРЕТЛӖ ПРИЗЫВ ҪИНЧЕН ПӖЛТЕРЕС.

§ 2. ПРИЗЫВА ҪАК ҪЫНСЕН ПЫМАЛА:

1. 1917 ҪУЛТА ҪУРАЛНИСЕН ПУРИНТЕ ТАТА 1918 ҪУЛӐН ПИРВАЙХИ ҪУРҪУЛЕНЧЕ ҪУРАЛНИСЕН.

2. Унтан асӑраххисен: а) иртнӗ призывсенче вӗренекен пулнипе отсрочкӑ илнӗ, кӑҫал шкултан вӗренсе йе ытти тӗрлӗ сӑлтавсемпе пӑрахса тухнӑ ҫынсен—отсрочкӑ миҫе ҫуллӑх панине шута илмесӗр, б) призыв вӑхӑтӗнче йалти шкулта вӗрентнӗ май отсрочкӑ илнӗ, халӗ учителӗ ӗҫне пӑрахнисен, в) йалхуҫалӑхӗнче квалификацилӗ специалиссем пулнӑ май 1938 ҫулхи кӗркуннехи призывчен отсрочкӑна усӑ курнисен, г) иртнӗ ҫулхи призывра чирлӗ пулнӑ пирки йе ӳссе ҫитмен пирки йулнисен, д) малтанхи призывсем вӑхӑтӗнче суд, следстви аллинче пулнӑ йе хупса лартнӑ пулнӑ, халҙ ирӗке кӑларнӑ ҫынсен.

§ 3. Призыв пуҫламали тата медицинӑ йенчен пӑхмали пӗрремӗш куна 1938 ҫулхи ҫентабӗрӗн 1-мӗшне уйӑрас.

§ 4. ЧАССР Ҫар комиссариачӗн, Улатӑр, Йӗпреҫ тата Канаш район Ҫар комиссариачӗсен призыв участкисен ҫумне ҫирӗплетнӗ граждӑнсен, хӑйсен, сывлӑхӗсене пӑхтарма кашнине уйрӑммӑн панӑ повестка кӑтартнӑ срукра йалсовет председателӗ йертсе пынипе призыв пунктне пымала.

Йалсовет председателӗсен аллинче призыва кӗрекенсен списки тата призыва пырайманнисен. кашни ҫын мӗн пирки пырайманнин сӑлтавне кӑтартса ҫырнӑ справкӑсем пулмала.

АСӐРХАТТӐРНИ: 1. Мӗнле те пулин сӑлтавпа повесткӑ илмен йе призыв участкисем ҫумне ҫирӗплетмен граждӑнсен повесткӑ илме (ҫак приказӑн иккӗмӗш параграфӗнче кӑтартнисен) йалсоветне йе райӗҫтӑвкома хӑйсен пымала.

2. Призыв ҫулне ҫитнӗ ҫынсен Чӑваш АССР территорийӗнче вӑхӑтлӑха кӑна пурӑнаҫҫӗ пулсан, вӗсен призыва кӗме хӑйсен ҫирӗплетнӗ участкӑри призыв пунктне вӑхӑтра каймала.

§ 5. Сывлӑха пӑхтарма пыракансен хӑйсен ҫумӗнче ҫакӑн пек документсем пулмала:

1) ҫар билечӗ, 2) призыва пымали ҫинчен панӑ повесткӑ, 3) вӑтам тата аслӑ шкул пӗтернӗ ҫынсен—вӗренни ҫинчен документ пулмала,

4) ПСК(б)П тата ПСҪЛКС членӗсемпе кандидатсен парти йе комсомол докумӗнчӗсем.

5. профсойуз членӗсен—член билечӗсем.

6) паспӑртсем—ӑна илнисен.

7) обшчӗствӑлла организацисенче (ОАХ тата ыт.) тӑнине кӑтартакан член билечӗ,

8) сывлӑх мӗнлине кӑтартакан докумеитсем (лабораторисенче пӑхнисем, рентген т. ур. те).

Призыва пырас умӗн ҫӳҫ кастармала тата мунча кӗмеле.

§ 6. ПРИЗЫВА ҪАК ҪЫНСЕН ПЫМАЛА МАР:

1. 1917 тата 1918 ҫулсенче ҫуралнӑ, призыв вӑхӑтӗнче Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗнче пурӑнакан йе саккун кӑтартнӑ срук хушши Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗнче пулнӑ граждӑнсен.

2. Отсрочкӑ пани ҫинчен удостоверени алла илнӗ вӗренекенсен, колхозсенчи, совхозсенчи, МТҪ-сенчи квалификацилӗ специалиссен.

3. Хупмалли вырӑнсенче ларакансен.

4. 1917—1918 ҫулсенче ҫуралнӑ, призыв участкисем ҫумне ҫирӗплетнӗ чухне ҫарта пулма йурӑхсӑрри ҫинчен документсем парса учотран кӑларса пӑрахнӑ граждӑнсен.

5. Йӑвӑр чирпе призыв пунктнӗ хӑйсем пыма пултарайманнисен.

АСӐРХАТТӐРНИ: Чирлӗ ҫынсӗн тӑванӗсен призыва кайма пултарайман ҫын ҫинчен государствӑ службинче тӑракан врачран справкӑ илмеле те, вӑл справкӑна йалсовет председателӗ урлӑ призыв пунктне тӑратмала.

§ 7. Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн кадрӑвӑй составне служба кайма йурӑхлӑ тесе йышӑннӑ призывниксене, вӗсен сывлӑхне пӑхнӑ хыҫҫӑн, ҫара кайиччен хӑйсен килти ӗҫӗсене йӗркелесе хӑварма кӗске вӑхӑтлӑха виҫӗ кунтан кайа мар отпуск параҫҫӗ.

§ 8. Призыва пынӑ пунктсенче пурӑннӑ вӑхӑтра призывниксем хӑйсен шутӗнчен апатланаҫҫӗ.

§ 9. Призыв пунктинче пулнӑ вӑхӑтшӑн призывник ӗҫ укҫи илет. Предприйатисемпе учрежденисен администрацийӗсем тата колхоз правленийӗсем Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарне тухса кайас умӗн призывниксене татӑклӑ расчот туса параҫҫӗ.

§ 10. Хупса усрамали вырӑнсем администрацийӗсен, халӑх сучӗн тата следстви органӗсен призыв пуҫланнӑ тӗле хупса лартнисен, суд тунисен тата следстви аллинчи ҫынсен спискине—Уголовнӑй Кодексӑн статйисене тата мӗн чухлӗ срукла хупса айӑпланнине кӑтартса, ҫавӑн пекех тата приписка тӑмалине ӗнентерекен хутсене районри Ҫар комиссариатне йӑрса памала.

§ 11. Районри ӗҫлӗ ҫынсен: йалсовет, райӗҫтӑвком тата милици работникӗсен пурин те призыв ҫинчен халӑха лайӑх пӗлтерес тата пур призывниксене те кӑтартнӑ вырӑнсене вӑхӑтра пымала тӑвас ӗҫре призыв пункчӗсене пур майпа та пулӑшса пымала.

§ 12. Призывран пӑрӑнакан ҫынсене РСФСР Уголовнӑй Кодексӗ тӑрӑх уголовлӑ йӗркепе ответ тыттараҫҫӗ.

§ 13. Ҫара рйадовой СОСТАВ ШУЧӖПЕ ТАТА КӖҪӖН, ВӐТАМ, АСЛӐ НАЧАЛҌСТВУЙУШЧИ СОСТАВ шучӗпе кайма тивӗҫлӗ ҫынсен сывлӑхӗнче улшӑнусем пулнӑ пулсан, ВӖСЕНЕ МЕДИЦИНА КОМИССИЙӖСЕНЕ ПЫРСА МАЛАШНЕ ҪАРА КАЙМА ЙУРӐХЛИНЕ ТӖРӖСЛЕМЕ ИРӖК ПАНА.

Ҫавӑн пек сывлӑха тӗрӗслеттерес текен ҫынсем призыв пунктне хӑйсен йалсоветӗнчи йе хулари призывниксемпе пӗрле пырса, пункт началҙникне заявлени ҫырса параҫҫӗ.

ЧАССР Ҫар Комиссарӗ—капитан ИЛАКИН.

Учмобчаҫт началҙникӗ—3-мӗш рангри интендант ШАМШУРАВ.

„Пионер сасси" хаҫат пӗлтерӗвӗ

Шупашкарти Коммуналлӑ-стройтехникума вӗренме кӗрес текенсене испытани августӑн 18-мӗшпе 20-мӗш кунӗсенче пулать, тесе пӗлтерчӗ „Пионер сасси" хаҫатра. Унпек пӗлтерни йӑнӑш пулнӑ. Испытани августӑн 13-мӗшӗнче пуҫланать.

„Пионер сасси" хаҫат редакцийӗ.

Ответлӑ редактӑр Н. М. СЕМӖНАВ.

Сойузоргучотӑн

Вӗренӳ-Учот-Економикӑ Комбиначӗн

Чӑваш республикӗнчи филиалӗ Шупашкарта пурӑнакан граждӑнсене

Курссене ҫак группӑсем тӑрӑх йышӑнать

Счетоводсен (9 уйӑхлӑх курс).
Бухгалтӗрсен (14 уйӑхлӑх курс).

Курс пӗтернисене учрежденисенче тата предприйатисенче вырӑн йышӑнма права паракан квалификацилӗ ӗнентерӳ параҫҫӗ.

Вӗренесси тӳлевлӗ.

Каҫхине производствӑран уйӑрӑлмасӑр вӗренмелӗ.

Заявленисене августӑн 25-мӗшӗччен йышӑнаҫҫӗ.
Занятисем ҫентабӗрӗн 1-мӗшӗнче пуҫланаҫҫӗ.
Справкӑсене кашни куна филиал ҫуртӗнче илме пулать.

Адрес: гор. Чебоксары, ул. Канашская, 18, с 10 до 16,5 часов ежедневно, кроме общих выходных дней.

1—3

Уполномоченный Чувглавлита № 426.

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 883.